М. Горького

ПЕТЕМ ТЕНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШЕР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĚ

Совет Союзěнчи Коммунистсен партийěн Чăваш обкомěпе Шупашкар хула комитечěн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечěпе Шупашкар хула Совечěн хаçачě

1953 çул Декабрь 30 юнкун № 254 (9163)

Хакě 20 пус. 36-мěш çул тухать.

Паянхи номерте

Тăван çěршывра (1 стр.).
Ялхуçалăх машинисене юсас ěçе татăклăн вăйлатмалла (1 стр.).
РСФСР Верховнăй Совет Президиумěн Указě (1 стр.).
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумěн Указě (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĚ: В. Никифоров.—Суту-илÿ организацийěсене ертсе пырассине вăйлатмалла (2 стр.)
ССР СОЮЗĚНЧИ ХАЛĂХСЕН ТĂВАНЛА ÇЕМЙИНЧЕ. В. Козлов. Советла Белоруссия—чечекленекен социализмла республика (2 стр.).
Н. Орлов.—Райпромкомбинат ěçне лайăхлатмалла (2 стр.).
Г. Луч.—Финанс планне ăнăçлă пурнăçласа пынă çěрте (2 стр.).
Обществăлла хуçалăх—колхоз пуянлăхěн çăлкуçě (3 стр.).
КУРШĔРИ ОБЛАÇСЕМПЕ РЕСПУБЛИКĂСЕНЧЕ (3 стр.).
А. Меркулов.—Румыни халăхěн пысăк çěнтерěвě (4 стр.).
Индири Коммунистсен партийěн виççěмěш съездě уçăлнă (4 стр.).
Юймыньри нефть промыслěсенче (4 стр.).

Çěнě çěнтерÿсен çулě

1953 çул вěçленет.

Совет Союзěнчи пур ырăнсенчен те 1953 çулхи плансене срокчен тултарни çинчен савăнăçлă хыпарсем килеççě. Пирěн аслă Тăван çěршывăн вěçě-хěррисěр анлă çěрěсем çинче питех те пысăк хěрÿ ěç пырет. Çěнěрен лартнă çěршер фабрикăсемпе заводсем, шахтăсемпе рудниксем, электростанцисемпе МТС-сем, ěççынисене пурăнма тунă пиншер çуртсем, шкулсем, клубсемпе дворецсем, миллиардшар пăт тырă—çавăн пек ěнтě пирěн çěршыври рабочи класăн, колхоз хресченěсен тата интеллигенцин 1953 çулхи творчествăлла ěçěн результачě. Çак çул пиллěкмěш пилěкçуллăха ăнăçлă пурнăçласси, мěнпур совет çыннисен материальнăй пурнăçне малалла лайăхлатассишěн пыракан кěрешÿре хуласемпе ялсенчи ěççыннисем çěнěрен творчествăлла вăй хунă çулталăк пулчě.

Халăх хуçалăхěн тěп отраслě—пирěн социализмла промышленность чаплă çитěнÿсем турě. 1953 çулта ССР Союзěнчи промышленность производствин пысăкăшě, вăрçăччени 1940 çулхипе танлаштарсан, икě хут çурă яхăн ÿсет. Пирěн социализмла экономикăн никěсěсен никěсě—йывăр индустри хăвăрт аталанать. Çак çулта совет металлургěсем çěршыва 38 миллион тонна ытла хурçă параççě, çěр кăмрăк промышленносěнчи работникěсем—320 миллион тонна ытла çěр кăмрăкě, совет нефтяникěсем—52 миллион тонна ытла нефть, энергетиксем 133 миллиард киловатт-сехет электроэнерги параççě. Хими промышленносěн продукцийě 1953 çулхи плана, 1940 çулхипе танлаштарсан, виçě хут, машинăсемпе оборудовани туса кăларасси—3,8 хут ÿсет. Иртсе кайкан çул пирěн промышленносăн хăватне нумай пысăклатать, социализмла производствăн мěнпур отраслěсене чи çěнě техникăпа хěçпăшаллантармалли майсене ÿстерет.

Совет халăхěн ырлăхěшěн тăрăшасси Коммунистсен партийěпе Совет правительствин тěп задачи пулса тăрать. СССР Верховнăй Совечěн пиллěкмěш сессийěн решенийěсем, партипе правительство куллен кирлě промышленность таварěсене апат-çимěç таварěсем туса кăларассине ÿстересси тата вěсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен, советла суту-илěве малалла аталантарса пырасси çинчен йышăннă постановленисем коммунизм строительствин задачисене пурнăçлассишěн пыракан кěрешÿре паллă тапхăр пулса тăраççě. Социализмла экономикăна аталантарас тěлěшпе тунă çитěнÿсен никěсě çинче партипе правительство 1953 çулта совет халăхě умне пысăк та паха задачăсем лартрěç: çăмăл промышленноçпа апат-çимěç промышленносне, социализмла ялхуçалăхне аталантарас ěçе пур майсемпе те хăвăрт вăйлатса пымалла, халăха таварсем парса тăрассине тата та ÿстермелле.

Ěççыннисен материальнăй тата культурăллă шайне историре халиччен пулман пек хăвăрт ÿстерме кирлě условисем пирěн Тăван çěршывăн пурте пур: хăватлă, чи малта пыракан техникăпа хěçпăшалланнă йывăр индустри, лайăх аталаннă çăмăл тата апат-çимěç промышленносě, тěрекленнě колхоз строй, производствăра, наукăпа техникăра пысăк квалификациллě кадрсем пур.

Партипе правительство социализмла ялхуçалăхне пур енчен те тěреклетессишěн тата ăна малалла аталантарассишěн питě хыта тăрăшаççě. КПСС Центральнăй Комитечěн сентябрьти Пленумěн историллě решенийěсем ялхуçалăх производствин мěнпур отраслěсене çěнěрен хăвăтлăн вăйлатмалли анлă программа палăртса пачěç. Çак программа çитес 2—3 çула хушшинче халăха апат-çимěç, çăмăл промышленноçпа апат-çимěç промышленносне чěртавар çителěклě парса тăмалла туса палăртать. Ку программăна пурнăçлама 1953 çултах ěнтě государство бюджечě тăрăх тата государствăн ытти укçи-тенкинчен, çавăн пекех колхозсен хăйсен укçи-тенкинчен ялхуçалăхне аталантарма 70 миллиард тенкě яхăн уйăрса параççě. Кăçал ялхуçалăхě 150 пин трактор (15 лаша вăйлă трактор çине куçарса шутласан), 42 пин комбайн та тěрлě ялхуçалăх хатěрěсемпе машинисем 2 миллион ытла илет.

Колхоз производствинче ěçе татса парас вăй пулса тăракан машина-трактор станцийěсем нумай тěреклененçě. МТС-сенче механизаторсен ялани кадрěсене тăваççě, колхозсем кăсене инженерсемпе техниксем тата агрономсем нумай [illegible].

Партипе правительство ялхуçалăхне малалла хăватлăн вăйлатас тěлěшпе тунă палăртнă ěçсене колхоз хресченěсем питех те хапăлласа [illegible]. Колхоз-сенче, совхозсемпе МТС-сенче ялхуçалăх производствин мěнпур отраслěсене, уйрăмах выльăх-чěрлěх ěрчетес, пахча çимěç лартса тăвас тата çěрулми туса илес ěçсене вăйлатассишěн ăмăртту анлăрах та анлăрах саралса пырать.

Социализмла экономикăна аталантарас тěлěшпе тунă çитěнÿсем совет халăхěн пурнăçне малалла лайăхлатма май пачěç. Халăха кирлě таварсем туса кăларасси 1953 çулта вăрçăччени 1940 çулхи шайран 72 процент иртет

Халăха кирлě таварсен хакěсене кăçал, йěркипе шутласан, улттăмěш хут йÿнетнě. Çакă вăл ěççыннисене 53 миллиард тенкě яхăн усă панă. Тавар çаврăнăшě чылай пысăкланчě. Малтанхи çулхипе танлаштарсан, халăха апат-çимěç таварěсем сутасси 22 процент ÿсет. Государство сывлăха сыхлас ěç, сутěç, социальнăй обеспечени валли укçа-тенкě нумай уйăрса панă.

Хуçалăха аталантарас тата халăх пурнăçне лайăхлатас тěлěшпе партипе правительство туса иртернě ěçсене пула, рабочисемпе служащисен реальнăй ěç укçи, колхозниксем укçан тата натурăпа илекен тупăш ÿснě, халăх тавар туянасси ÿснě.

1953 çул совет наукипе культурине аталантарас ěçре çěнě çитěнÿсем тунипе паллă пулса тăрать. Пирěн ученăйсем наукăн мěнпур отраслěсене çěнě открытисемпе пуянлатаççě, çěршыври производствăлла вăйсене аталантарас ěçе калама çук хыта хăвăртлатма малашлăх уçса паракан ыйтусене ăнăçлă татса параççě.

Совет писателěсем, театрпа кино деятелěсем, художниксем, композиторсем Тăван çěршывăн культура пуянлăхěсене нумайлатаççě, совет çыннисен культура тěлěшěнчен ÿссе пыракан ыйтăвěсене лайăхрах тивěçтерсе пыраççě. Ěççыннисене коммунизм ěçне чунтан-чěререн парăнса тăракан пулма воспитани парас ěçре партипе государствăна активлăн пулăшаççě.

Пирěн халăхăн, истори тăвакан, çěнě, коммунизмла общество тăвакан халăхăн, талантěсем нихçанхинчен вăйлăн палăраççě. Совет çыннисен творчествăлла пысăк вăй-хăвачě, вěсен пěрмай ÿссе пыракан активлăхěпе пуçарăвě—пирěн Тăван çěршывăн çěнěрен те çěнě çитěнěвěсен иксěлми çăлкуçě. Промышленносра, транспортра, ялхуçалăхěнче малта пыракансемпе новаторсен нумай йышлă çарě пирěн пурнăçра пример кăтартса пырать, социализмла производствăна аталантарас ěçре çěнě малашлăх уçса парать.

Коммунистсен партийěпе правительство тавра тачă пěтěçнě совет халăхě коммунизм строительствинче çěнě çěнтерÿсем патне шанчăклăн пырать. Пирěн обществăна аталантарса пыракан хăватлă вăйсем: моралě-политикăлла пěрлěх, совет патриотизмě, ССР Союзěнчи халăхсен туслăхě тата ытларах аталанчěç. Совет халăхěн пěрлěхне тата вăл тачă пěтěçсе тăнине никам та хавшатма пултараймасть. Пирěн халăх коммунизм обществи тăвас ěçе пурнăçлассишěн нихçанхинчен те хастарлăрах кěрешет.

Аслă Совет Союзěпе пěрле халăх демократи çěршывěсем хăйсен хуçалăхпа культура строительствинче пысăк çитěнÿсем турěç Европăри халăх демократи çěршывěсенче социализм строительстви анлă фронтпа саралса пырать. Аслă Китай Халăх Республикин экономики вăйланнăçемěн вăйланать. Паттăр Демократиллě Корея Халăх Республикинчи ěççыннисем вăрçăпа юханнă хуçалăха хăвăртрах юсаса çитерессишěн çине тăрса кěрешеççě.

Социализмпа демократи лагерě прогресс чечекленÿ çулěпе пыракан хăватлă лагерě. Вăйěсем тěрекленсе тата ÿссе пыраççě Çав вăхăтрах капитал çěршывěсенче ěçсěрлěх ÿсет, ěççыннисен анлă массисем чухăнланасси вăйланать. Капитализмла монополисем вěсене хытăрах та хытăрах сăратаççě. Вăскаса хěçпăшалланни, халăх хуçалăхне милитаризацилени капитализмла çěршывсенчи экономикăна хавшатать.

Совет халăхě çěнě çула—1954 çула савăнăçлăн тата шанчăклăн кěтсе илет.

Совет халăхě коммунизм строительствинче тунă çитěнÿсем питех те пысăк, анчах унăн умěнче тăракан задачăсем тата пысăкрах. Çав задачăсене пурнăçласси пирěн Тăван çěршыва тата ытларах вăйлатать, халăх пурнăçне малалла лайăхлатать, социализмла обществăна пур енчен те чечеклентерет. Коммунистсен партийě тата унăн Центральнăй Комитечěпе Совет правительстви ăслăн ертсе пынипе пирěн çěршыв ăнăçлăн малалла, коммунизмла общество тăвас çулпа пырать.

(«ПРАВДА» хаçатăн 1953 çулхи декабрěн 29-мěшěнчи [illegible]).

Кулундапа Барнаул хушшинчи чугун-çул участокне туса пěтерне

БАРНАУЛ, декабрěн 28-мěшě. (ТАСС). Кăнтăр-Çěпěр чугун çулне тунă çěрте ěçлекенсем Кулундапа Барнаул хушшинчи участокне [illegible] туса пěтерчěç. [illegible] 18 пин кубометр бетон хывнă, [illegible] миллион кубометр ытла тăпра чавса кăларнă. Пурăнмалли çуртсем 13 пин кубометр чухлě тунă.

Государство комиссийě чугун çулăн çěнě участокне йышăннă.

ТĂВАН ÇĚРШЫВРА

Черкасы районěнчи Хрущев ячěпе тăракан колхоз председателě пулса Галина Евгеньевна Буркацкая юлташ ěçлет. Вăл—СССР Верховнăй Совечěн депутачě. Г. Е. Буркацкая юлташа Киев облаçěнче кăна мар, Украина ССР-ěнчи ытти облаçěсенче те лайăх пěлеççě.

Вăл ертсе пыракан колхоз—нумай отраслě, пур енěпе те аталаннă, кашни çулленех пысăк тупăш илекен хуçалăх. Хрущев ячěпе тăракан колхоз кăçалхи 11 уйăх хушшинче выльăх-чěрлěхрен 750 пин тенкě, пěтěмпе 4 миллион тенкě тупăш илнě.

Колхозниксен пурнăçě çуллен-çул лайăхланса пырать. Кăçал колхозниксем кашни ěçкунě пуçне 2.2-шер килограмм тырă, ытти продуктсем нумай тата 10-шар тенкě укçа илеççě. Колхоз пысăк тупăш илнě май производство çурчěсем тата культурăпа йăла учрежденийěсем лартас ěçе анлăн сарса янă. Кăçал сыснасене усрама икě вите туса пěтернě, унта механизациленě çул тунă, ěне вити туса пěтереççě.

Г. Е. Буркацкая колхоз председателě пулса ěçленě вăхăтрах Киеври ялхуçалăх институтěнче заочно вěренет.

ÿКЕРЧĚК ÇИНЧЕ: колхоз председателě Г. Е. Буркацкая.

В. СЫЧЕВ фотоÿкерчěкě (ТАСС фотохроники).

ХУРÇА ШĂРАТСА КĂЛАРМАЛЛИ ÇУЛТАЛĂКРИ ПЛАНА ТУЛТАРНĂ

МАГНИТОГОРСК, декабрěн 28-мěшě. (ТАСС) Паян Магнитогорскри металлурги комбиначě хурçă шăратса кăлармалли çулталăкри плана срокчен тултарнă. Мартен цехěсенче ěçлекенсен коллективě металл шăратса кăларассине 7,2 процент ÿстернě.

ВЦСПС XII-мěш пленумě

ВЦСПС-ăн декабрěн 26-мěшěнче уçăлнă XII-мěш пленумě декабрěн 28-мěшěнче малалла ěçленě.

Пленумра Н. М. Шверник юлташ тунă доклада сÿтсе явнă хыççăн, пленум тěплě решени йышăннă.

Унтан пленум Профессиллě Союзсен Пěтěм Союзри XI-мěш съездне пулассипе çинчен сÿтсе явнă. Ку ыйтупа ВЦСПС секретарě Н. В. Попова юлташ доклад тунă.

Пленум Профессиллě Союзсен Пěтěм Союзри XI-мěш съездне 1954 çулхи майăн 25-мěшěнче Мускав хулинче пухма йышăннă. Съезд кун йěркинче çакăн пек ыйтусем пулаççě:

1. Пěтěм Союзри Профессиллě Союзсен Центральнăй Совечěн отчетлă доклачě.
2. Центральнăй ревизи комиссин отчетлă доклачě.
3. ССР Союзěнчи профессиллě союзсен Уставěнчи улшăнусем çинчен.
4. Пěтěм Союзри Профессиллě Союзсен Центральнăй Советне тата ВЦСПС Центральнăй Ревизи Комиссине суйласси.

Профсоюзсен Пěтěм Союзри XI-мěш съездне представительсем суйламалли нормăна çирěплетнě. Делегатсене отраслěсенчи профсоюзсен съездěсенче вăрттăн сасăласа суйламалла.

Пленум ССР Союзěнчи профессиллě союзсен Уставне кěртмелли улшăнусене палăртса хатěрлеме 39 çынтан комисси суйланă.

Профессиллě Союзсен Пěтěм Союзри XI-мěш съездě умěн профсоюз органěсен отчечěсемпе суйлавěсем пулаççě.

ВЦСПС пленумě профсоюз организацийěсене тата профсоюз членěсене пурне те XI-мěш съезда хатěрленес тěлěшпе активлă ěçлеме, миллионшар рабочисемпе служащисен производствăри хастарлăхне ÿстерме тата социализмла ăмăртăва анлăн сарса яма, съезда коммунизм строительствинче çěнě çитěнÿсем тунипе кěтсе илме чěнсе калать. (ТАСС).

1954 çул валли коллективлă договорсем тăвасси çинчен

ВЦСПС президиумě 1954 çул валли коллективлă договорсем тăвасси çинчен сÿтсе явнă. Коллективлă договорсене мěнле пурнăçланине тěрěслени, тесе каланă çак ыйтупа йышăннă постановленире промышленноçпа транспорт, ялхуçалăх предприятийěсенчи, стройкăсенчи, суту-илěвпе обществăлла апатлану предприятийěсенче профсоюз организацийěсемпе хуçалăх органěсем коллективлă договорсем тăрăх илнě обязательствăсене пурнăçлас тěлěшпе нумай ěçсем тăваççě.

Анчах чылай предприятисенче обязательствăсене çителěксěр пурнăçласа пыраççě-ха.

Партипе правительство 1954 çул валли совет халăхě умне кăларса тăратнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлама, тесе каланă малалла постановленире, профсоюз организацийěсемпе хуçалăх руководителěсен коллективлă договорсен пěлтерěшне тата ытларах ÿстермелле, мěншěн тесен коллективлă договор государство планěсене пурнăçлама тата иртерсе пурнăçлама, ěççыннисен пурнăçне лайăхлатса пыма, культура тěлěшпе ěççыннисемшěн ытларах ěçлеме массăсене мобилизацилеме пулăшать.

1954 çул валли коллективлă договорсем тăвасси хуçалăхпа политикăлла паха кампани пулса тăрать Çак кампание иртернě чухне массăсене СССР Верховнăй Совечěн пиллěкмěш сессийě, КПСС Центральнăй Комитечěн сентябрьти Пленумě йышăннă решенисене, партипе правительство халăха куллен кирлě таварсем туса кăларассине вăйлатса пырасси тата совет суту-илěвне вăйлатасси çинчен йышăннă решенисене ăнăçлă пурнăçлама мобилизацилемелле

Профсоюз организацийěсемпе хуçалăх органěсен государство планне кашни предприяти, кашни цех тата участок пурнăçламалла тата иртерсе пурнăçламалла тăвассишěн ěç тухăçлăхне ÿстерессишěн, продукци пахалăхне лайăхлатассишěн тата хăйне ларакан хакне йÿнететессишěн, чěртавар, материалсем, топливо, электроэнерги, укçа-тенкě перекетлессишěн, производствăри шалти резервсене палăртса усă курмалла тăвассишěн социализмла ăмăртăва тата анлăрах сарса памалла.

ВЦСПС президиумě профсоюзсен Центральнăй Комитечěсене министерствăсемпе тата ведомствăсемпе пěрле коллективлă договорсем тума срокcем кăтартса панă. Промышленность, транспорт, строительство, ялхуçалăх предприятийěсенче, совхозсенче, сыхану предприятийěсемпе организацийěсенче, государство суту-илěвěпе обществăлла апатлану предприятийěсенче январьпе февраль уйăхěсенче, машина-трактор тата вăрман лартакан станцисенче—мартăн 15-мěшěччен. торф кăларакан предприятисенче—1954 çулхи апрель уйăхěнче коллективлă договорсем тумалла.

1954 çул валли коллективлă договорсем тăвас умěн пур çěрте те 1953 çулхи коллективлă договорсене мěнле пурнăçланине тěрěслесе тухмалла

Çěнěрен тунă коллективлă договорсене кашни рабочипе служащи ăнлантарса памалла. (ТАСС).

РСФСР Верховнăй Совет Президиумěн Указě

ЧĂВАШ АССР ЯЛХУÇАЛĂХЕПЕ ХАТĚРЛЕВ МИНИСТЕРСТВИНЕ ЧĂВАШ АССР ЯЛХУÇАЛĂХ МИНИСТЕРСТВИ ТУСА ХУРАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумěн сěнěвне çирěплетсе, Чăваш АССР Ялхуçалăхěпе хатěрлев министерствине Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви туса хурас.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумěн Председателě М. ТАРАСОВ.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумěн Секретарě И. ЗИМИН.

Мускав, 1953 çулхи декабрěн 22-мěшě.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумěн Указě

Д. Н. НИКОЛАЕВА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЯ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĚН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Çуралнăранпа çитмěл пилěк çул тултарнă май, халăха вěрентес ěçре нумай çул хушши лайăх ěçленěшěн Даниил Николаевич Николаева Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумěн Хисеп грамотипе наградăлас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумěн Председателě З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумěн Секретарě А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1953 çулхи декабрěн 28-мěшě.

Çěнě хваттерсенче

СĔНТЕРВĂРРИ. (Телефонпа). Хулапа юнашар çěнě поселок ÿсет. Ку вăл—судоверфьре ěçлекен рабочисен поселокě. Юлашки икě-виçě çул хушшинче кунта икě хваттерлě çичě çурт, нумай хваттерлě икě çурт туса лартнă. Кăçал çěнěрен икě хваттерлě тата 28 хваттерлě çуртсем туса пěтерчěç.

Çěнě çул умěн предприятире ěçлекен рабочисемпе служащисем тата инженерсемпе техниксем пурě 30 семье çěнě хваттерсене пурăнма куçрěç.

Хваттерсем аслă та çутă. Унта электричество, радио кěртнě. Икě хутлă çуртăн аялти хутěнче магазин уçнă.

А. АЛЕКСАНДРОВ.

* * *

Канашри вагонсем юсакан заводри нумай рабочисем çěнě çул тěлне çěнě хваттерсене пурăнма куçаççě. Сăмахран, чугун шăратакан цехра ěçлекен В. Дмитриев, Г. Васильев тата Хайрутдинов юлташсем çěнě çула çěнě хваттерте кěтсе илеççě. Çěнě çуртсенче водопровод, кухньăсем, ваннăсем пур. Хваттерсене пăспа ăшăтмалла тунă.

А. ВАСИЛЬЕВ.

Ялхуçалăх машинисене юсас ěçе татăклăн вăйлатмалла!

Çуракине начар хатěрленеççě

ЧУРАЧĂК. Районти уйрăм колхозсем çитес çуракине ăнăçлă хатěрленеççě. Сăмахран, Сталин ячěпе тăракан колхоз лайăх вăрлăх хатěрленě, уя тислěк чылай кăларнă, минераллă удобренисем кÿрсе янă. «За коммунизм» колхозра Н. Афанасьев коммунист ертсе пыракан трактор бригади минераллă удобрени турттарса пама тытăнчě.

Çав вăхăтрах чылай колхозсен руководителěсем çуракине хатěрленме васкамаççě. Уйрăмах «Комсомолец» колхозра (председателě Ефимов юлташ) ěçсем начар пулса пыраççě. Вăрлăх валли çапнă тырра кěрěçепе кăна сăвăрса тасатнă, паутсемпе ытти машинисем юр айěнче выртаççě. Витесенче пухăнакан тислěке сырма хěрне купалаççě, ăна çурхи шыв юхтарса кайма пултарать. Агроном Денисова юлташ çав çитменлěхсене курмасть: вăл колхоза 3—4 сехетлěхе çеç пырса каять.

Районти нумай колхозсенче кантăр вăрри кондицине лармасть. Ăна лайăх вăрлăхпа улăштармалла. Анчах халě колхоз руководителěсенчен пěри те вырăнтан хускалман.

Çěрулмипе пахча çимěç тăватлах тěмěн лартма тата вěсене çěнě меслетсемпе пăхса ÿстерме колхозниксене агротехника курсěсенче вěрентмелле. «Совет», «Самолет» тата Ворошилов ячěпе тăракан колхозсенче паянхи куна пилěкшер занятие иртернě. Унта 25—30-шар çын вěренет. Анчах «Совет», «Красный восток» колхозсенче пурě те пěрер занятие кăна иртернě.

П. ПАВЛОВ, М. ГРИГОРЬЕВ.

Ялхуçалăх машинисене юсама тытăнман

ВĔПРЕÇ, декабрěн 29-мěшě. (Хамăр корр.). МТС тракторсем юсамалли плана иртерсе тултарчě, çавăн пекех çак кварталта комбайнсемпе ытти машинăсем юсамалли плана та тултарнă.

Çав вăхăтрах районта нумай колхозсенче, пěтěм ěçе МТС техникипе туса парасса шанса, ялхуçалăх машинисене юсама тытăнман. «Трудовик» колхозра (председателě Сидоров юлташ) çавăн пекех Мичурин ячěпе тăракан колхозра (председателě Иванов юлташ) ку таранччен пěр машина та юсаман. Плугсене юсама кирли çинчен пачах манни. Сеялкăсем юр айěнче выртаççě.

Колхозсем çултан-çул кучухнехи çěнě те кăткăс машинисемпе пуянланса пыраççě. Вěсене юсама пысăк квалификациллě тимěрçěсем кирлě. Çав вăхăтрах аста тимěрçěсем хатěрлес тěлěшпе районта нимěн тума те курăнмасть. МТС çумěнче тимěрçěсем валли курссем е семинарсем иртерсен аван пулмалла. Унта тимěрçěсене кучухнехи кăткăс машинăсемпе паллаштармалла тата çав машинисене юсамалли технологипе паллаштармалла.

Колхозсенче ялхуçалăх машинисене юсас ěçе хăвăртлатса пынă вăхăтрах, механизаторсен кадрěсене яланах çирěплетме тăрăшмалла. Çакăн пек тунă ялхуçалăх машинисемпе ěçлекен кадрсем тăтăш улшăнса тăнине пěтерме пулěччě. Çапла вара машинăсем ěнерě те нумай вăхăта пыма пулěччě.

П. ЩИПЦОВ.

Çěнě станок

КОМСОМОЛЬСКИ. «Знамя коммунизма» колхозри пахча çимěç бригадин бригадирě Василий Давыдович Давыдовпа колхоз тимěрçи Николай Степанович Степанов пахча çимěç калчисене ÿстермелли торфпа çěрěн тăпри чěлмекěсем тумалли станок тунă. Йывăçран тунă станок йывăрăшě 90 килограмм яхăн, çÿллěшě 39 сантиметр, сарлакăшěпе тăршшě пěрер метр. Станок çинче пěр çын ěçлет. Унпа кашни 15—20 минутра 40 чěлмек туса пулать.

Алăпа ěçлемелли станокпа кунне [illegible] çын кун каçиччен 4—5 пин чěлмек тунă пулсан, ку станокпа 5 çын 50—55 пин чěлмек çапма пултараççě. Çапла ěнтě çěнě станок ěç хăвăртлăхне [illegible]. Алăпа ěçлемелли станокпа 4 пин чěлмек çапнăшăн 3,75 ěçкунě расходланă пулсан, ку станокпа 40 пин чěлмек çапма икě ěçкунě расходланать. Кашни хěрěх пин чěлмек пуçне (урăхла каласан пěр гектар çине лартмалăх пахча ÿстерме) 35 ěçкунě перекетленет.

Станок конструкцийě питě çăмăл. Кун пек станока колхозри кашни столярпа тимěрçě туса пултарать.

Çак кунсенче Давыдов юлташ хăйěн станокне район центрне илсе пырса кăтартрě. Станок конструкцийě çинчен тунă доклада районти партипе совет активě итлерě.

И. КВАСОВ, В. ТАЛЛЕРОВ.

Семинарта

ШАХАСАН. Çак кунсенче районти ялхуçалăх работникěсен икě кунлăх семинарě пулса иртрě. Унта агрономсемпе зоотехниксем, ветеринари врачěсемпе фельдшерěсем, колхоз председателěсемпе бригадирěсем, трактор бригадисен бригадирěсемпе колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен секретарěсем 200 çын яхăн пулчěç.

Малтанхи кун семинарта пухăнисем ялхуçалăх институчěн профессорě Пельцых юлташ çěрулмипе тăватлах тěмěн лартса тухасси меслет çинчен, çак институтăн доценчě Баталов юлташ пысăк тухăçлă пахча çимěçсем ÿстересси çинчен тунă докладсене тата ялхуçалăх наукисен кандидачě, доцент Кружилин юлташ «Обществăлла выльăх-чěрлěх валли апат хатěрлемелли [illegible] майсем çинчен» туса панă доклада итлерěç.

Иккěмěш кунне Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин выльăх-чěрлěх ěрчетес тěлěшпе ěçлекен управлени начальникě [illegible] юлташ выльăх-чěрлěхе хěл вăхăтра пăхса усрасси [illegible]. Чăваш АССР Ялхуçалăх министрěн заместителě Осипов юлташ КПСС Центральнăй Комитечěн сентябрьти Пленумěн постановленине пурнăçлас тěлěшпе тумалли ěçсем çинчен доклад туса пачěç.

[illegible] Ворошилов ячěпе тăракан колхозри [illegible] бригадин бригадирě [illegible] юлташ хăй ертсе пыракан бригада [illegible] çěрулми [illegible] туса илни çинчен, [illegible] ячěпе тăракан колхоз председателě Андреев юлташ [illegible] пěлтерчěç.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Суту-илӳ организацийĕсене ертсе пырассине вăйлатмалла

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕçхалăхĕсен пурнăçне лайăхлатассишĕн ырми-канми тăрăшаççĕ. Халăхсен интересĕсене тивĕçтересси, ĕçхалăхĕсен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшасси коммунистсен партийĕн тĕп закон пулса тăрать. Советла суту-илĕве малалла аталантарас тĕллĕшпе, промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине вăйлатас тĕллĕшпе партипе правительство кăларнă çĕнĕ постановленисем те çакна лайăх çирĕплетсе параççĕ.

Халăх ыйтăвĕсене пĕтĕмпех тивĕçтерессине, товар çаврăнăшне вăйлатассине суту-илӳ организацийĕсен ĕçне куллен вăйлатса пырсан кăна ăнăçлă туса пыма пулать. Ĕçхалăхĕсен пурнăçне лайăхлатас çак задача советла суту-илӳ ĕçне партипе совет органĕсем енчен лайăх ертсе пыма хушаççĕ.

Анчах та хăшпĕр райкомсем хăйсен ертсе пырас ĕçĕсене КПСС Центральнăй Комитечĕ хушнă пек çĕнетсе улăштармаççĕ, суту-илӳ ыйтăвĕсемпе сахал интересленеççĕ, ĕçхалăхĕсен ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтермелле тума конкретлă мерăсем йышăнмаççĕ.

Калинино, Красноармейски, Шăмăршă тата Тăвай районĕсенчи суту-илӳ организацийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Ку районсенчи магазинсемпе лавккасенче тăвар, шăрпăк, махорка, супăнь тата куллен кирлĕ ытти таварсем час-часах пулмаççĕ. Кунтах суту-илӳ правилисене пăсса пыраççĕ, товар илекенсен кăмăлĕсене шута илмеççĕ. КПСС райкомĕсем вара суту-илӳ организацийĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăмаççĕ, çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмаççĕ. Парти комитечĕсем çителĕксĕр ертсе пынине пула предприятисенчи пуçламăш парторганизацисем те кирлĕ пек ĕçлесе пымаççĕ.

Çĕмĕрле райпотребсоюзĕнчи парторганизацие (секретарĕ Галин юлташ) илер. Кунта политикăлла-массăлла ĕçе пачах туса пымаççĕ теме çук. Анчах та çак ĕçре пысăк çитменлĕхсем нумай. Парторганизаци партилле-политикăлла ĕçе вырăнти задачăсемпе çыхăнтармасăр тăвать, уйрăм работниксем ĕç дисциплинине пăснине килĕшсе пырать, çапла вара работниксем хушшинче хăйĕн влиянине палăртаймасть. КПСС райкомĕ парторганизаци ответлăхне ӳстерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасть.

Советла суту-илĕве ертсе пырасси, унăн организацийĕсемпе предприятийĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесси, магазинсемпе лавккасен, тата столовăйĕсемпе чайнăйĕсен ĕçне лайăхлатса, ĕçхалăхĕсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме пулăшасси—парти организацийĕсен тивĕçĕ.

Суту-илӳ системинче икĕ тĕрлĕ парторганизаци ĕçлет: райпотребсоюзсемпе райпосенчи тата вырăнти торгсенчи парторганизацисем. Вĕсен администраци ĕçне тĕрĕслесе тăмалли право çук. Анчах та çак право çукки суту-илӳ организацийĕнчи пуçламăш парторганизацисен ответлăхне чакармаллине, çитменлĕхсемпе килĕшсе пымаллине пĕлтермест.

Райпотребсоюзсемпе райпосенчи тата вырăнти торгсенчи пуçламăш парторганизацисем аппаратри работниксем мĕнле ĕçленĕшĕн ответ тытаççĕ. Вĕсен суту-илӳ организацийĕсенче советла йĕркесене çирĕп тытса пыма пулăшмалла, коммунистсемпе партире тăман работниксене учреждени умĕнче тăракан тĕп задачăсене татса пама воспитани парса пымалла.

Пуçламăш парторганизацисен учреждени ĕçне лайăхлатмалли тĕп меслет работниксене политикăлла воспитани пани пулать. Суту-илӳ работникĕсене партипе правительство умĕнче тӳрĕ кăмăллă пулма, государство дисциплинине лайăх тытса пыма, социализмла пурлăха перекетлĕн упрама воспитани парасси—парторганизацисен тивĕçĕ.

Çак ĕçсене тĕрĕс йĕркелесен, аппарата ĕçлеме вĕрентсе пыни суту-илӳ организацийĕн ĕçне тата вырăнти предприятисене ертсе пырассине вăйлатма май парать.

Суту-илӳ предприятийĕсенчи парторганизацисене администраци ĕçне контроллесе тăма право панă. Кун пек парторганизацисем умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Предприятири парторганизацисем мĕнпур ĕçе тĕрĕслеççĕ, товар çаврăнăш планне тултарма коллектива мобилизацилеççĕ, ертсе пыракан работниксен отчечĕсене итлеççĕ, кадрсене советла суту-илӳ правилисене тĕрĕс тытса пыма воспитани параççĕ.

Хăшпĕр парторганизацисем хăйсене панă çак пысăк правăсемпе туллин усă курмаççĕ. Сăмахран, Шупашкарти 8-мĕш номерлĕ магазинти пуçламăш парторганизаци администраци ĕçне тĕрĕслемест, кирлĕ ыйтусене парти пухăвĕсенче сӳтсе явмасть. Кунта товар илекенсене улталама пăхни çинчен калакан тĕслĕхсем те тĕл пулкалаççĕ. Анчах парторганизаци çавăн пек йĕркесĕрлĕхсене хирĕç тивĕçлипе кĕрешмест. Парторганизаци суту-илӳ работникĕсем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе те кирлĕ пек туса пымасть. Кун пек тĕслĕхсем ытти хăшпĕр парторганизацисенче те тĕл пулаççĕ.

Парторганизаци енчен тĕрĕслесе тăни—суту-илӳ предприятийĕсен пĕтĕм ĕçне лайăхлатмалли паха меслет. Пуçламăш парторганизацисен çитменлĕхсене хирĕç кĕрешнипе пĕрлех работниксен творчествăлла активлăхне ӳстерсе пымалла, малта пыракан работниксен паха опытне мĕнпур коллектив патне çитермелле.

Парти енчен тĕрĕслесе тăрас тени советла суту-илӳ меслечĕсене тăтăшах çĕнетсе пымаллине, ĕçхалăхĕсен кăмăлне туллин тивĕçтермеллине, перекетлĕ пулмаллине, работниксен политикăлла пĕлĕвĕпе ĕç квалификацине ӳстерсе пыма кирлине пĕлтерет.

Предприятира парторганизацисен партипе правительство постановленийĕсенчен тухса тăракан задачăсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине, парти пухăвĕ йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланса пынине тăтăшах тĕрĕслес пулать.

Советла суту-илӳ ăнăçлăхне, пуринчен малтан, кадрсене тĕрĕс суйласа илсе вырнаçтарни татса парать. Çак чыслă ĕçе шанса панă работниксенчен нумайăшĕ хăйсен ĕçне тӳрĕ кăмăлпа туса пыраççĕ. Анчах та хăшпĕр суту-илӳ организацийĕсенче вара ответлă вырăнсене шанчăксăр çынсене лартни те пулкалать. Суту-илӳ организацийĕсемпе предприятийĕсенчи парторганизацисен кадрсемпе ĕçлессине тăтăшах лайăхлатса пырас пулать.

Партипе правительство советла суту-илĕве малалла вăйлатас тĕллĕшпе лартнă задачăсем ертсе пыракан парти органĕсене лайăхрах ĕçлеме хушаççĕ. Партин районсемпе хуласенчи комитечĕсен, парторганизацисемпе коммунистсен активлăхне ӳстерсе, суту-илӳ ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерсе, советла суту-илӳ ĕçне куллен вăйлатса пымалла.

В. НИКИФОРОВ.

Райпромкомбинат ĕçне лайăхлатмалла

Ишлейри райпромкомбинат чылайранпа юлса пырать. Вунпĕр уйăхра производство планне 90 процент кăна пурнăçланă. Çăматă йăвалакан, атă-пушмак çĕлекен тата столярнăй цехсем кăçал уйрăмах япăх ĕçлеççĕ.

Кăçал комбинатăн 3 пин мăшăр çăматă туса кăлармалла. Халĕ пин мăшăра яхăн кăна йăвалана. Тухăçлă ĕçлеме машинăпа çителĕклĕ усă курманни, ĕçе тĕрĕс йĕркелеменни чăрмантарать. Пĕр машинăпа куллен 25—30 мăшăр çăматă туса кăларма пулать. Октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче вăтам шутпа кунне 13-шар мăшăр çеç йăвалана. Цехăн урайĕсенче пăчă, сывлăш таса мар; анчах пулин те унта вентиляци çук.

Иртнĕ çулсенче тăмран савăт-сапа тăвакан цех пулнă—Усăсăр цех, унăн продукцине сутма çук,—тенĕ промкомбината ертсе пыракансем. Вĕсен сăмахĕсене райсовет исполкомĕнче те килĕшнĕ, цеха хупнă. Усăсăр цех тесе калама сăлтав çук. Илемлĕ, тĕрлĕ сăрăпа сăрласа тунă савăт-сапана ĕçхалăхĕсем хапăл тусах туянмалла.

Колхозсем урапа-çуна, урапа кустăрмисем, кирпĕч çывăхра çуккишĕн, ĕçхалăхĕсем—савăт-сапа, сехет, патефон юсакан мастерской çуккишĕн пăшăрханаççĕ. Комбинат дирекцийĕ ĕçхалăхĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерме тăрăшмасть. Райпромкомбинатăн райпотребсоюзпа тунă договор тăрăх 61 пин тенкĕлĕх тавар памалла пулнă, тĕрĕссипе 18 пин тенкĕлĕх кăна панă.

Промкомбинатра рабочисен техникăлла пĕлĕвĕсене ӳстерме, квалификацине хăпартма тăрăшмаççĕ. Директор калани тăрăх, çĕвĕ çĕлекен тата столярнăй цехсенче ăста мастерсем ĕçлеççĕ, вĕсене тивĕçлĕ разряд панă. Анчах рабочисем хăйсене мĕнле разряд панине пĕлмеççĕ.

— Темĕн чухлĕ ĕçлесен те, квалификаци ӳстерме çук,—теççĕ рабочисем.

Юлашки 5—6 çул хушшинче аттестаци комиссийĕ ĕçленине комбинатра астумаççĕ. Ĕç тухăçлăхне ӳстерме чăрмантаракан тепĕр сăлтав вăл—социализмла ăмăртăва йĕркелеменни. Кăтарту хăмине Хисеп хăми çук, стена хаçачĕ кăлармаççĕ. Лайăх ĕçлекенсен опытне пĕтĕм çĕре сармаççĕ.

Рабочисем нормăна тултарнипе тултарманнине уйăх вĕçленсен тепĕр эрнерен кăна пĕлме пулать. Кунта иртнĕ уйăхра хăш цех е хăш рабочи мĕнле ĕçленине кăтартакан сводкăсемпе кăтарту хăмисем туса чăрманмаççĕ.

Промкомбинат ĕçĕ çинчен райисполком ларăвĕсенче сахал мар сӳтсе явнă, решенисем нумай йышăннă. Анчах çав решенисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемеççĕ, ĕçри çитменлĕхсене пĕтермеççĕ.

Н. ОРЛОВ.

ИСПОЛКОМ ОТЧЕЧĔ

Нумай пулмасть ĕçхалăхĕн депутачĕсен Канаш район Совечĕн улттăмĕш сессийĕ пулса иртнĕ. Сесси райисполком ĕçĕсем çинчен тунă отчета сӳтсе явнă. Ку ыйтупа райисполком председателĕ Б. С. Соловьев юлташ доклад тунă.

Докладчик та, пренире тухса каланă депутатсем те райисполком ялхуçалăхне аталантарас ĕçе çителĕксĕр ертсе пынине палăртнă. Районти нумай колхозсенче çĕр ĕç культури çӳлĕ шайра тăмасть, курăк акмалли тĕрĕс пусă çаврăнăшĕсене вăраххăн йĕркене кĕртсе пыраççĕ, чылай колхозсенче агротехникăлла ĕçсен комплексне кирлĕ пек пурнăçламаççĕ, акасуханя вăхăтра тумаççĕ, тырпула пухса кĕртес ĕç вăраха каять. Машина-трактор станцийĕ тракторпа тумалли ĕçсен планне пурнăçламан, колхозсене уй-хире тислĕк кăларма, минераллă удобренисем кӳрсе килме, фермăсенчи ĕçсене механизацилеме, выльăх апачĕ хатĕрлеме сахал пулăшать.

— Районта çурак ĕçне хатĕрленес ĕçе япăх йĕркеленĕ,—тет МТС агрономĕ Ф. Алешин юлташ.—Нумай колхозсенче вăрлăх нӳрĕ. Вăрлăх тасатас ĕçе начар организациленĕ. Агрозоотехника курсĕсен занятийĕсем йĕркеллĕ иртмеççĕ. Хăшпĕр колхозсенче курссен руководителĕсем хăйсене шанса панă ĕçшĕн ответлăха туймаççĕ. 1954 çулта машина-трактор станцийĕнче çуртсем чылай лартмалла. Çак çуртсене тума строительство материалĕсем тупса парас тĕллĕшпе райисполком тата райплан сахал ĕçлеççĕ. Райисполком руководителĕсем машина-трактор станцийĕнче сайра-хутра çеç пулаççĕ.

Сессире П. Ильин депутат райисполком ял Совечĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăманнине палăртнă. Хăшпĕр ял Советсем исполком ларăвĕсен тата сессисен протоколĕсене райисполкома вăхăтра тăратмаççĕ, çав протоколсене райисполкомра никам та пăхса тухмасть, ял Совечĕсем йышăннă решенисем тĕрĕс мар пулсан, вĕсене тӳрлетме пулăшни çук.

— Райисполком пайĕсен заведующийĕсем ялсенче пулнă чухне ял Советсем мĕнле ĕçленипе интересленмеççĕ, вĕсене пулăшмаççĕ,—тенĕ Вăрăмпус ял Совечĕн председателĕ Б. Кузьмин юлташ.

Трахомăран сыватас ĕçре çитменлĕхсем нумай, çитменлĕхсене пĕтерме сывлăха сыхлас ĕç пайĕн заведующийĕ Антипов юлташ сахал тăрăшать. Райисполком пайĕсен заведующийĕсем малашне ял Советсене практикăлла ĕçсене организацилеме пулăшчăр.

Суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлас ĕçе начар йĕркеленине сессире Е. Ф. Кармакова Г. А. Антонов депутатсем палăртнă. Суйлавçăсем Мăкăр ялĕнче клуб лартма сĕнӳ панă. Çак сĕнĕве пурнăçа кĕртме пур майсем те çителĕклĕ. Анчах ăна пурнăçлама тăрăшмаççĕ.

Канаш вăрманпромхозĕ мĕнле ĕçленипе райисполком сахал интересленни, унта исполком председателĕ Соловьев юлташ 1953 çулта пĕр хут çеç пулни, унăн заместителĕ Федоров юлташ пачах пулманни çинчен М. Краснов депутат каласа панă. Çав вăхăтрах вăрманпромхозра касна йывăçа турттарса тухмалли плана пурнăçлас ĕç япăх тăрать. Йывăç турттарнă çĕрте 13 колхоз ĕçлемелле, анчах пилĕк колхоз çеç ĕçлет.

Сесси исполкома ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме хушса хăварнă.

М. РОДИОНОВ.

„Тăван Атăл" альманахăн çĕнĕ кĕнеки

Çак кунсенче Чăваш Совет писателĕсен Союзĕ кăларса тăракан «Тăван Атăл» альманахăн тăваттăмĕш кĕнеки пичетрен тухрĕ.

Кĕнекере çак произведенисем пичетленнĕ: Г. Николаевăн «Жатва» романĕ тăрăх Г. Николаевăпа С. А. Радзинский çырнă «Василий Бортников» («Çӳлĕ хум») ятлă пьеса; М. Хури тата П. Ялгир сăввисем; А. Талвирăн «Пăва çулĕ çинче» романĕн пĕрремĕш кĕнекин юлашки пайĕ; Н. Андреев—«Чăваш чĕлхин стилистики çинчен» (статья) тата ытти те.

Финанс планне ăнăçлă пурнăçласа пынă çĕрте

Шăхасан районĕнчи Çĕнĕ [illegible] ял Совечĕ (председателĕ С. Яковлев юлташ) чылай вăхăт хушши [illegible]. Кăçал вара ял Совечĕ районта малта [illegible] ял Совечĕсен шутне кĕнĕ.

Ял Советĕнче ялан ĕçлекен комиссисем тăватă. Вĕсем пурте хăйсен ĕçне лайăх туса пыраççĕ.

Бюджетпа финанс комиссийĕнче (председателĕ Г. Дмитриев юлташ) икĕ депутат тата 5 активист. Комисси кашни кварталтах ĕç планĕ тăвать. План тăвас умĕн комисси членĕсем ĕçхалăхĕсен хушшинче пулса, вĕсемпе канашлаççĕ. Вĕсен сĕнĕвĕсене шута илеççĕ. Кун хыççăн ĕç планне комисси ларăвĕнче пăхса тухса çирĕплетеççĕ. Комисси членĕсене В. Семенов депутата—Молотов ячĕпе тăракан колхоз çумне, Е. Васильева депутата — Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз çумне çирĕплетнĕ. Çирĕп план тăрăх ĕçлени финанс планне тупăшсем енĕпе те, расходсем енĕпе те кашни кварталта тултарса пыма май парать.

Ял Совет исполкомĕ хăйĕн ларăвĕсенче налог укçи пухăссипе мĕнле пыни çинчен налог агенчĕн Н. Клементьев юлташăн докладне, бюджетпа финанс комиссийĕн председателĕн Г. Дмитриев юлташăн содокладне кашни кварталта ик-виçĕ хутран кая мар итлесе, тивĕçлĕ решенисем йышăннă. Бюджет мĕнле пурнăçланса пыни çинчен кăçал ял Совечĕн виçĕ сессийĕнче, ĕçхалăхĕсен тăватă пухăвĕнче сӳтсе явнă. Çак ыйтăва пăхса тухма депутатсемпе активистсене анлăн явăçтарнă. Çавна май ял Совечĕ тăваттăмĕш кварталти финанс планне декабрĕн 16-мĕшĕ тĕлне 109,7 процент тултарчĕ.

Паллах, çак çитĕнӳ хăй тĕллĕн пулман. Кунта организациле-массăлла ĕçе аван йĕркеленĕ. Ял Совечĕ Ворошилов ячĕпе тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсенчи парторганизацисемпе, колхозсен правленийĕсемпе тачă çыхăну тытса ĕçлет. Финанс ыйтăвне парти пухăвĕсенче те, правлени ларăвĕсенче те час-часах сӳтсе яваççĕ. Уй-хир бригадирĕсен кашнин алăнче бригадăра укçа-тенкĕ тӳлес тĕлĕшпе камăн мĕн парăм пурри çинчен çырнă список пур. Çапла май бригадирсем колхозниксене ялхуçалăх продукчĕсене пасара илсе кайса сутма ăнлантарса параççĕ. Кунсăр пуçне, кăçал колхоз правленийĕсем ялхуçалăх продукчĕсене сутма кайма колхозниксене темиçе хутчен те автомашина панă. Коммунистсемпе комсомолецсем халăх хушшинче укçа-тенкĕ парăмĕсене вăхăтра парса татни государствăшăн пысăк усăллă ĕç пулни çинчен ăнлантараççĕ. А. Якимов, Б. Кириллов, С. Яковлев тата ытти чылай депутатсем укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарассишĕн уйрăмах хытă тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем халăх пухăвĕсенче, ферма работникĕсем хушшинче, кĕске калаçусем, колхозниксем ăçта ĕçлесе, çавăнта пулса, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлама чĕнеççĕ.

Кăçал ял Совечĕ самообложени укçипе Тăрăн ялĕнче общественнăй пĕр çăл çĕнĕрен тутарнă, кивĕ çăлсене юсаттарнă. Пушарпа кĕрешмелли хатĕрсем 1.200 тенкĕлĕх илнĕ.

Налог агенчĕ Н. Клементьев юлташ кашни кварталтах укçа пухмалли план тăвать. Вăл кварталăн малтанхи уйăхĕнче халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана 50 процент, иккĕмĕш уйăхĕнче 30 процент, виççĕмĕш уйăхĕнче 20 процент тултарма палăртать. Çак плана çирĕппĕн пурнăçласа пыни укçа пухмалли задачисене срокчен тултарма май парать.

Г. ЛУЧ.

Шăхасан районĕ.

Ялти активпа çыхăнса ĕçленипе

Шупашкар районĕнчи Сĕньял ял Совечĕ финанс планне кашни çулах ăнăçлă тултарать. Çакă ял Советĕнчи налог агенчĕ М. С. Николаев юлташ укçа-тенкĕ пухас тĕллĕшпе тимлĕ ĕçленинчен нумай килет.

Николаев юлташ Шупашкар районĕнчи финанс пайĕн Сĕньялти налог агенчĕ пулса 1947 çултанпа ĕçлет. Çак тапхăрта вăл кунти колхозăн экономикине, кашни колхозникăн килти хуçалăхĕ мĕнлине лайăх вĕренсе çитнĕ. Çавăнпа та вăл колхоз тупăшран памалли налога, колхозниксен килĕсем тĕрлĕ парăмсене хăçан тӳлесе татма пултарассине пĕлсе тăрать. Ялти условисене тĕплĕн пĕлни Николаев юлташа укçа пухмалли задачисене вăхăтра пурнăçлама нумай пулăшать.

Ял бюджетне тупăшсем енĕпе ăнăçлă тултарасси налог агенчĕ ял Совечĕпе тата активпа тачă çыхăнса ĕçленинчен килет. Ĕçре йывăрлăхсем килсе тухсанах, Николаев юлташ ял Совет председателĕнчен Ильин юлташран укçа-тенкĕ пухас ĕç мĕнле пыни çинчен исполкомра е сессире сӳтсе явма ыйтать. Финанс планне тултарасси çинчен тĕплĕн сӳтсе явса решени йышăннă хыççăн, ял Совет исполкомĕн решенине пурнăçлама активистсем йышлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем халăх хушшинче партипе правительство ĕçхалăхĕсен материальнăй пурнăçне лайăхлатма тата культурине ӳстерме аллăвах хытă тăрăшни çинчен, укçа-тенкĕ парăмĕсене вăхăтра тӳлесе татни пĕлтерĕшĕ çинчен ăнлантарса параççĕ.

Ăнлантару ĕçне Николаев юлташ хăйĕн кулленхи тивĕçĕ тесе шутлать. Вăл хуçалăхла-политикăлла задачăсем çинчен ăнлантарса панă чухне ял Совечĕн бюджечĕ мĕнле пурнăçланса пыни, бюджетри укçапа мĕнле ĕçсем туни çинчен каласа кăтартать. Вăл налог тӳлемелли пĕлтерӳсене вăхăтра валеçсе тухать, кама налогран хăтарнă, ăна çавăн çинчен çийĕнчех пĕлтерет. Камăн хăçан мĕнле налог тата мĕн чухлĕ тӳлемелли çинчен ялсенче астутарса тăрать, ялхуçалăх налогĕ е ытти парăмсене срокчен тӳлесе татакансенчен пример илме чĕнет. Вăл укçа пухма хăш яла хăçан пырассине малтанах пĕлтерсе хурать, унччен парăм тӳлеме укçа хатĕрлеме ыйтать.

Çакăн пек меслетсемпе ĕçлени Николаев юлташа укçа-тенкĕ пухмалли задачисене пур йышши налогсем тата тӳлевсем енĕпе те срокчен пурнăçлама май парать. Вăл кăçал ялхуçалăх налогĕ укçине октябрь уйăхĕнчех пухса пĕтернĕ, ытти тӳлевсене пухмалли плана та срокчен тултарнă.

Николаев юлташ укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе лайăх ĕçленине Чăваш АССР Финанс министерстви приказĕсенче палăртнă, темиçе хутчен укçан преми панă, икĕ хутчен Хисеп грамотипе наградăланă. Чăваш АССР Финанс министерстви 1953 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕнче кăларнă приказ тăрăх М. С. Николаев юлташăн ятне Финанс министерствин Хисеп кĕнеки çине çырнă.

Н. ЯСКОПОЛЬСКИЯ.

ССР Союзĕнчи халăхсен тăванла çемйинче

Советла Белорусси—чечекленекен социализмла республика

В. КОЗЛОВ,
Белорус ССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ

Совет Союзĕнчи халăхсем Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ертсе пынипе тĕнчере пĕрремĕш социализмла общество туса хучĕç тата халĕ коммунизм патне шанчăклăн утаççĕ. Çак тĕнчипе паллă çĕнтерӳсем совет обществин тата советла государство стройĕн аслă вăйне, пирĕн çĕршывра халăхсен çирĕп туслăхне, пирĕн партипе правительство пурнăçласа пыракан ленинла-сталинла наци политикин чаплă çĕнтерĕвне кăтартса параççĕ.

СССР-ти халăхсен туслăхĕ—совет обществине малалла илсе пыракан тĕп вăйсенчен пĕри.

«...СССР-ти халăхсем хушшинчи туслăх,—тенĕ И. В. Сталин,—пысăк тата чаплă çĕнтерӳ. Çак туслăх пур чухне пирĕн çĕршыври халăхсем ирĕклĕ пулаççĕ тата вĕсене никам та çĕнтереймĕ. Çак туслăх пур чухне пирĕншĕн никам та, шалти тăшмансем те, тулашри тăшмансем те хăрушă мар».

1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче Белорус ССР-не туса хунăранпа 35 çул тултарать. Совет халăхĕсен туслăхĕн хăвачĕ пирĕн республикăн пурнăçĕнче лайăх палăрса тăрать.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Белоруссие, ытти хăшпĕр советла республикăсене пекех, гитлерла оккупантсем [illegible]

ке вăхăтрах тӳрлетсе çитерчĕç, экономикăпа культурăна аталантарса пырас ĕçре çĕнĕрен чаплă çитĕнӳсем турĕç. Çавна пирĕн халăх социализмла строй малта тăнипе пула, аслă вырăс халăхĕ тата Совет Союзĕнчи ытти халăхсем тăванла пулăшнипе пула, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕçхалăхĕсен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшса ĕçленипе пула тума пултарнă.

Вăрçă хыççăнхи тапхăрта белорус халăхĕ промышленноçа çĕнĕ техника никĕсĕ çинче юсаса çĕнетрĕ. Республикăна малалла индустриализацилесе пырас ĕçре те пысăк çитĕнӳсем тунă. Промышленноçа юсасси тата аталантарасси пысăк хăвăртлăхсемпе пулса пынă. Белоруссин промышленноçĕ продукци туса кăларнин 1940 çулхи шайран 1950 çултах 16 процент иртнĕ, тĕп отраслĕсем тăрăх вара, сăмахран, металран хатĕрсем тăвасси 2,4 хут, машинăсем тăвасси 3,2 хут иртсе кайнă. Пиллĕкçуллăхра промышленность тата пысăкрах хăвăртлăхсемпе аталанса пырать.

Белоруссин промышленноçĕнче вăрçă хыççăн çĕнĕ отрасльсем нумай тунă: автомобильсем, тракторсем, [illegible]

йышлăн туса кăларма тытăннă, ăна пур çĕрте те ырлаççĕ.

Советла Белоруссире çăмăл промышленность тата апат-çимĕç промышленноçĕ малалла аталанса пыраççĕ. Вăрçă хыççăнхи тапхăрта Минскра мотовелозавод, Минскра тата Гродненра çӳхе сукна тĕртекен комбинат, Витебскра коверпа плюш комбиначĕ, Скиделра сахăр заводĕ, Лидара резинăпа атă-пушмак комбиначĕ тата ытти пысăк предприятисем туса лартнă.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине хăвăрт вăйлатас, ĕçхалăхĕсен пурнăçне малалла лайăхлатса пырас тĕллĕшпе йышăннă историлле решенисене Белоруссири ĕçхалăхĕсем, мĕнпур совет çыннисем пекех, чĕререн хавхаланса кĕтсе илчĕç. Ку решенисене пурнăçланă май Белоруссире çăмăл промышленность тата апат-çимĕç промышленноçĕ тата ытларах вăйланса пыраççĕ.

Халĕ Минскра камвольнăй комбинат тăваççĕ, вăл бостон, габардин, коверкот, шевиот, трико çултанăра [illegible] миллион метр тĕртсе кăлармалла пулать. Çĕнĕ çĕлекен фабрикăсем сахăр, Витебскра пурçăн пир-авăр тĕртекен фабрика тата халăха куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан ытти предприятисем тума тытăнаççĕ. Республикăн апат-çимĕç промышленноçĕ те чылай вăйланать. [illegible]

Советла Белоруссин ялхуçалăхĕ ăнăçлă аталанса пырать. Комму-

нистсен партийĕпе Совет правительстви куллен-кун пулăшса пынипе республика ялхуçалăхĕ техникăпа пуянланчĕ. Машина-трактор станцисен шучĕ вăрçăччен-хинчен чылай иртсе кайрĕ. 18 машина-мелиораци тата улăх-çаран мелиораци станцийĕсем, 200 машина-мелиораци отрячĕсем тунă. Халĕ Белоруссири МТС-сенче тракторсем вăрçăччен-хинчен 2.5 хут нумайрах, комбайнсен хисепĕ пилĕк хут ӳсрĕ, тырă тасатакан машинăсем 6.5 хут, молотилкăсем пĕр хут çурă ытларах шутланаççĕ. Çĕнĕ МТС-сем, машинăсем юсакан заводсем, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене тĕпрен юсакан мастерскойсем тăваççĕ.

Юлашки çулсем хушшинче республикăн хĕвеланăç облаçĕсенче ялхуçалăхне социализмла çĕнетсе улăштарас тĕллĕшпе пысăк ĕçсем туса иртернĕ. Çак облаçсенчи хресченсем, коллективлă хуçалăх усăллăрах пулнине ĕненсе, колхозсене пĕрлешрĕç, халĕ республикăри мĕнпур хресченсемпе пĕрле социализмла ялхуçалăхне малалла аталантарассишĕн хастарлă кĕрешеççĕ.

Белоруссире тĕштырăсен тата техникăлла культурăсен тухăçĕ вăрçăччен-хинипе танлаштарсан, чылай ӳснĕ. Халĕ апат-çимĕç культури — тулă акакан çĕр лаптăкĕ нумай пысăкланнă. Колхозсенче общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çултан-çул ӳсет, вăл хальхи вăхăтра вăрçăччен-хинчен шайран чылай иртсе кайнă.

Нумай колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илеççĕ, продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетеççĕ, хăйсен общественнăй хуçалăхне пуянлатаççĕ, ĕçкунĕсем тăрăх ытларах валеçсе параççĕ. Колхозсен тупăшĕсем çулсерен ӳсеççĕ, колхозниксен пурнăçĕ лайăхланать. Сăмахран, Бобруйск облаçĕнчи Кировски районĕнчи «Рассвет» колхозăн укçа-тенкĕ тупăшĕ 1952 çулта 4.394 пин тенкĕ пулнă, 1953 çулта вара вăл 10 миллион тенкĕ çитет. Могилев районĕнчи «Коминтерн», Слуцк районĕнчи «1-мĕш Май», Минск районĕнчи «Гастелло ячĕпе» тăракан тата ытти нумай колхозсем те хăйсен тупăшĕсене чылай ӳстерчĕ.

Анчах республикăн ялхуçалăхĕнче халĕ пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Нумай колхозсенче тата районсенче тĕштырăпа техникăлла культурăсен, çĕрулмипе пахча çимĕçсен тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ колхоз производствин тĕп отраслĕсем юлса пынин сăлтавĕсене уçса пачĕ, ялхуçалăхне малалла аталантарса пымалли çул-йĕре палăртрĕ. Пленум решенийĕсене пурнăçласа, Белоруссири Коммунистсен партийĕ ялхуçалăхĕн юлса пыракан отраслĕсене çĕклентерме, ялхуçалăх культурисен тата выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне ӳстерме, колхозниксен пурнăçне хăвăрт лайăхлатма кирлĕ ĕçсене тăвать.

Халăх хуçалăхĕ ӳснипе пĕрлех белорус халăхĕн форми тĕлĕшĕнчен национальнăй, содержани тĕлĕшĕнчен социализмла культури аталанса пырать. Хальхи вăхăтра Белоруссире 84 наука учрежденийĕ, 30 аслă шкул, техникумсем, училищĕсем тата специальнăй вăтам шкулсем 118, пуçламăш, çичĕ çул вĕренмелли тата вăтам шкулсем 11.546 ĕçлеççĕ. 8 театр, 1.946 киноустановка, 1.436 библиотека, 2.036 вулав çурчĕ, 700 яхăн клуб пур.

Белорус халăхĕн социализмла культури тăванла совет халăхĕсен культурипе тачăн çыхăнса тăрать. Белорус ССР-ти Наукăсен академийĕ, государство университечĕ, наука учрежденийĕсемпе аслă шкулсем тăванла совет республикисенчи учёнăйсемпе çыхăну тытаççĕ. Тăванла республикăсен самрăк ученăйĕсенчен чылайăшĕ пирĕн Наукăсен академийĕн наукăпа тĕпчев учрежденийĕсенче тата аслă шкулĕсенче ĕçлеççĕ. Белорус чĕлхипе Карл Марксăн «Капиталне», В. И. Ленин сочиненийĕсене тата И. В. Сталин сочиненийĕсен тулли изданине пичетлесе кăларнă. Вырăс тата тĕнче литератури классикĕсен, тăванла республикăсенчи совет писателĕсен произведенийĕсене тăтăшах пичетлесе кăлараççĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тăрăшнипе Советла Белоруссири рабочисен, колхозниксен тата интеллигенцин пурнăçĕ пĕрмаях лайăхланса пырать. Çакна апат-çимĕçпе промышленность таварĕсене вакăн сутмалли государство хакĕсене пĕрмаях йӳнетсе пыни, ĕçхалăхĕсен тупăшĕсем ӳсни, вĕсем таварсем ытларах туянма пултарни аван кăтартса парать. 1952 çулта республикăра государство тата кооперации суту-илĕвĕ енĕпе, 1950 çулхипе танлаштарсан, выльăх çăвĕ—78 процент, сахăр—37.5 процент, тутăр—50.2 процент, музыка таварĕсем—87 процент, сĕтел-пукан 31 процент ытларах сутнă.

Республикăри хуласемпе ялсенче пурăнмалли çуртсем, культурăпа йăла учрежденийĕсем лартасси вăйлăн сарăлса пырать. Хуласенче пур çĕрте те пурăнмалли çуртсем лартаççĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче ялсенче пурăнмалли çуртсем 516 пин тунă.

Советла Белоруссин столици Минск хули ӳссе пырать. Вăрçă нимĕçсем хăварнă вырăнсенче халĕ чаплă кварталсем лараççĕ. Тĕп урам—Сталин ячĕпе тăракан проспект—хула илемĕ, республика столицинчи строительсен мухтавлă ĕçĕ пулса тăрать. ССР Союзĕнчи тăванла халăхсем Минска çĕнĕрен тума пысăк пулăшу пачĕç, çавă ăна вăхăтрах пирĕн çĕршывăн чи хитре хулисенчен пĕри туса хума май пачĕ.

1953 çулта виçĕ республика — Белорусси, Латви тата Литва чиккинче «Халăхсен туслăхĕ» ятлă гидроэлектростанци туса лартнă. Ăна латышсем, литовецсем тата белоруссем турĕç. Строительствăна çавăн пекех Уралти турбостроительсем, Ереванри трансформаторщиксем тата ыттисем те хутшăнчĕç. Çакă пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхне палăртакан чаплă ĕç пулса тăрать.

Совет Союзĕнчи халăхсем чаплă историллĕ аслă кун—Украина Российĕпе пĕрлешнĕренпе 300 çул тултарнине уявлама хатĕрленеççĕ. [illegible]

Обществăлла хуçалăх—колхоз пуянлăхĕн çăлкуçĕ

Çак кунсенче Вăрнар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра Сталин ячĕпе тăракан тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсенчи активăн, районти колхоз председателĕсен, пуçламăш парторганизаци секретарĕсен, ялхуçалăх специалисчĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура РСФСР тата Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствисен представителĕсем те пулчĕç.

Канашлу куç йĕрĕнче КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ «ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление пурнăçлас, ялхуçалăх культурисен тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес, колхоз производствин пур отраслĕсене те вăйлатас ыйтусем тăчĕç. Çак ыйтусем тăрăх Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕн заместителĕ Социализмла Ĕç Геройĕ А. Д. Ашанин юлташ, Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Ф. Михеев юлташ тата МТС директорĕ И. Андреев юлташ доклад сем туса парчĕç.

Хаçатăн паянхи номерĕнче канашлура тунă докладсене тата тухса калаçнисене кĕскен пичетлетпĕр.

Колхозсен обществăлла хуçалăхне хăвăрт вăйлатмалли майсем

А. АШАНИН,
Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕн заместителĕ, Социализмла Ĕç Геройĕ

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ «ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени колхозсем умне колхоз производствин мĕнпур отраслĕсене хăвăрт аталантарас тата çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче пирĕн çĕршывра мĕнпур ялхуçалăх продукчĕсем ытлăн-çитлĕн пулмалла тăвас задача кăларса тăратрĕ.

Çĕрĕсне пысăк культурăллă туса пынипе тата агротехникăн малта пыракан мелĕсемпе анлăн усă курнипе, пирĕн колхоз çулсеренех пысăк тухăçлă тырпул туса илет. Юлашки 5 çул хушшинче акнă мĕнпур лаптăк çинче тĕштырăсене вăтам шутпа кашни гектартан 23-шер центнер пухса илнĕ. Çурхи тулă уйрăмах пысăк тухăçлă чухать. 1944—1946 çулсенче вăл кашни гектартан 14 центнер кăна пухса илнĕ пулсан, 1950—1952 çулсенче 35,3-шер центнер туса илнĕ.

Мĕнле майпа эпир пысăк тухăçлă тырпул туса илетпĕр-ха?

Вăйлă тырпул никĕсĕ вăл курăксем акса тăвакан çĕрĕç системине пĕтĕмпех йĕркелесе çитернинче, çĕре тарăн сухалани нче, хире органикăлла тата минераллă удобренисем нумай кăларнинче, пысăк пахалăхлă тата сортлă вăрлăхсем акнинче, мĕнпур уй-хир ĕçĕсене агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх срокĕсенче тата пысăк пахалăхпа ирттернинче пулать. Çĕрĕн сухалаласси çинче эпир. 1951—1952 çулсенче 30—35 сантиметр тарăн таранлатрăмăр. Ку ĕçре пире Вăрнар МТС-ĕн Социализмла Ĕç Геройĕ П. Пронькин ертсе пыракан икĕмĕш трактор бригадинчи механизаторсем пысăк пулăшу пачĕç.

Çĕре тарăн сухалани кăна кирлĕ результатсем пама пултараймасть-ха. Пирĕн нумай çулхи опыт çакна кăтартса парать, çĕрĕн сухаламалли сийне тарăнлатассипе пĕр вăхăтрах органикăлла тата минераллă удобренисем нумай сапмалла пĕрле туса пымалла. «Хире тислĕк нумайрах кăларсан пулмесенче тырă пулă ытларах» текен халап пур. Çак чăнлăха эпир яхсав та манмастпăр. Эпир выльăх-чĕрлĕх фермисенче пухăнакан тислĕке кăна мар, колхозниксен килĕсенчен те мĕнпур тислĕке хире кăларатпăр. Анĕ ытларах, кашни гектар çине 40—50 тонна шутпа, çĕртме уйне кăларатпăр. Çĕрулмине тымарçимĕçсем лартмалли тата силос тумалли культурăсем акмалли вырăна та тислĕк нумай кăларатпăр. Сăмахран, эпир 1951 çулта уй-хире 20 пин тонна, 1952 çулта—21 280 тонна тислĕк кăларнă пулсан, 1953 çулта 22.130 тонна кăларнă.

Тырпул тухăçлăхне ÿстермелли тепĕр пысăк май—вăрлăх Эпир пысăк кондициллĕ, пахал та сортлă вăрлăх кăна акатпăр. Акмалли норма çине уйрăмах тимлĕн пăхатпăр. Çурхи тулă кашни гектар çине 2,5 центнер, ырашн—2 центнер, сĕлĕ—2 центнер, пăрçа—2,5 центнер акатпăр. Тĕштырăсене хĕреслĕ тата ансăр ретлĕ майсемпе акатпăр.

Вăрлăха мĕн тарăнăшне акасси çине те уйрăмах тимлĕн пăхни кирлĕ. Çурхи тулăна нипле те 4—5 сантиметртан тарăн акма юрамасть. Тарăн аксан унăн тухăçлăхĕ чакать. Эпир ăна хамăр опытра лайăх куртăмăр.

Кăçал эпир вунă уйлă пусă çаврăнăшĕнче таса çĕртмене пĕтертĕмĕр. Ун вырăнне çĕрулми уйĕ турăмăр, çĕрулми лартнă лаптăка 250 гектара çитертĕмĕр. Çак опыт ăнăçлă пулчĕ. Кашни гектартан 224 центнер çĕрулми пухса илтĕмĕр. Пысăк тухăçлă çĕрулми туса илни обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат ытларах хатĕрлеме, колхозăн укçа-тенкĕ тупăшне ÿстерме май пачĕ Выльăх апачĕ валли кăна 20.000 центнер çĕрулми уйăртăмăр, унсăр пуçне артель государствăна 2.000 центнер пачĕ, колхоз пасарĕнче 2.160 центнер сутрĕ, колхозниксене ĕç кунĕ тăрăх 12.400 центнер валеçсе пачĕ, çурхунне колхоз пасарĕнче сутма 2.720 центнер хатĕрлесе хунă.

Пирĕн колхоз нумай çул ÿсекен курăксем акмалли çĕр лаптăкне 350 гектара çитерчĕ. Çавăн пекех 35 гектар тымарçимĕç, 25 гектар силослăх культурăсем акса тунă Вĕсем пысăк тухăçлă пулчĕç. Кашни гектартан клевер утти 80—120 центнер, выльăх кăшманĕ 850 центнер тухрĕ. 500 тонна силос хывса хăварнă.

Тырпул тухăçлăхне ÿстерес ĕçре эпир пысăк çитĕнÿсем турăмăр. Анчах вĕсем пире тивĕçтерме пултараймасçĕ-ха Пирĕн колхозниксем çакăн пек задача лартрĕç: çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче тĕштырăсен тухăçлăхне 40—50 центнера çитермелле. Мĕнпур ялхуçалăх культурисене акса тумалли агротехникăна вĕренсе çитсе, колхоз производствине совет агрономи наукине тата çĕршывра малта пыракан колхозсен опытне кĕртсе, эпир çав задачăна чыслăн пурнăçлăпăр.

Пирĕн колхоз обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те хăшпĕр çитĕнÿсем турĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пур выльăхсем енĕпе те тултарнă Колхозăн ĕне выльăхсем 475 вырăнне 495 пур. вĕсенчен сăвакан ĕнесем 160. Фермăра 1.007 сысна, вăл шутра амасем 150 е планпа пулмаллинчен икĕ хут ытларах. Сурăхсем 750 пуç вырăнне 914 пуç, кайăк-кĕшĕксем 2.400 пуç вырăнне 4 214 пуç усратпăр. Колхоз халĕ кашни 100 гектар сухалакан çĕр, улăхçаран тата кĕтÿ çÿретмелли вырăн пуçне 20 ĕне, 40 сысна, 36 сурăх, 167 пуç кайăк-кĕшĕк усрать. Колхозниксен килĕсенче те выльăхсем нумай.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕ ÿснипе пĕрлех унăн тухăçлăхĕ те ÿсет. Юлашки виçĕ çул хушшинче ĕнесенчен сĕт суса илесси икĕ хут ÿсрĕ. 1951 çулта кашни ĕнерен 1.350 литр, 1952 çулта—1.756 литр сĕт суса илнĕ. Кăçалхи вунпĕр уйăх çурă хушшинче 2.482-шер литр суса илнĕ. 1955 çул вĕçленнĕ тĕле пирĕн обществăлла кĕтÿре ĕнесем 350 пуçа çитмелле. сĕт суса илессине 3.500 литра çитерме палăртнă. Ĕнесене кĕтÿре çÿретессине тата сыснасене самăртассине лайăхлатса, кăçал колхоз кашни 100 гектар сухалакан çĕр пуçне 22.2 центнер ĕне ашĕ. 28 центнер сысна ашĕ илме пултарчĕ.

Колхозра выльăхсен ăратне лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттеретпĕр. Юлашки виçĕ çул хушшинче сĕт нумай паракан симментал ăратлă ĕнесем 30 тунянă. Сысна кĕтĕвĕнче çурри ытла ăратлă сыснасем шутланаççĕ. 1955 çулта ĕнесем 60 процентран кая мар, сурăхсем 94 процент тарăн, сыснасем пĕтĕмпех ăратлисем пулмалла.

Пахча çимĕç акса тăвассине нумай вăйлататпăр Пилĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле кашни гектартан купăста 500 центнер, помидорпа хăяр—250 центнер сухан — 150 центнер туса илме палăртнă. Çак отраслĕрен илекен укçа-тенкĕ тупăшĕ кăçал 380 пин тенке çитрĕ.

Колхоз йĕтĕнпе кантăр чылай акать Кăçал 70 гектар йĕтĕн акнă унтан 30 пин тенкĕрен кая мар тупăш пулать. Малашне техникăлла культурăсем акса тăвассине тата чылай ÿстеретпĕр. унăн тухăçлăхне ÿстерессишĕн те тăрăшатпăр.

Артель хуçалăхне пур енĕпе те аталантарса пыни колхозăн укçа-тенкĕ тупăшне султан-çул ÿстерет. 1950 çулта артелĕн тупăшĕ 918 пин тенкĕ пулнă пулсан, кăçал 3 миллион тенке яхăн çитет, 1954 çулта 5 миллион тенке çитмелле. 1952 çулта укçа-тенкĕ тупăшĕ сухалакан çĕрĕн кашни гектарĕнчен 662 тенкĕ кăна пулнă пулсан, кăçал 1.290 тенке çитет, çитес çулсенче 2.000 тенкĕ ытла пулмалла.

Пирĕн колхозниксем ĕçкунĕпе пысăк тупăш илеççĕ. Кăçал кашни ĕçкунĕ пуçне 3 килограмм тырă, 6 килограмм çĕрулми, 3 килограмм пахча çимĕç, 6-шар килограмм выльăх апачĕ тата 5-шер тенкĕ укçа валеçсе параççĕ. Кунсăр пуçне ашкаайпа усламçу валеçеççĕ. Укçа çине куçарса шутласан пĕр ĕçкунĕн хакĕ 21 тенкĕ те 50 пус пулать. Çакăн пек пысăк тупăш илни колхозниксен ĕçри хастарлăхне татах ÿстерет, ĕç дисциплинине çирĕплетет Пирĕн колхозра ĕçкунĕн минимумне тултарман пĕр колхозник та çук.

Вăрнар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра пулса иртнĕ канашлăва пынă колхоз председателĕсем, парти организацийĕсен секретарĕсем тата зоотехниксемпе агрономсем Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозри Социализмла Ĕç Геройĕсемпе А Д Ашанинпа (сулахайран иккĕмĕшĕ) тата П. П. Пупинпа (сылтăмран иккĕмĕшĕ) калаçаççĕ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

МТС—колхоз производствине аталантарас ĕçре

И. АНДРЕЕВ,
Вăрнар МТС директорĕ

Машина-трактор станцийĕсем социализмла шутра предприяти пулса тăрса, халăх вăхăтра колхоз производствин аталанăвĕнче ĕçе татса паракан вырăн йышăнаççĕ.

1953 çулта Вăрнар МТС-ĕ тĕп ĕçсене çавăн чухлĕ механизацилесе çитерчĕ: кĕрхи çĕртмепе ирхи çĕртме тăвассине—99—100 процент, çурхи тырăсем акассине—71 процент, кĕрхи тырăсем акассине—93 процент, тырă вырса пухассине (комбайнсемпе) — 47 процент.

Выльăх-чĕрлĕхе пăхас ĕçре ĕç вăйĕ нумай кирлĕ. Çав вăхăтрах МТС фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет Çавăн пекех выльăх апачĕ туса илес тата вырăнти удобренисемпе минераллă удобренисем туртарас ĕçре те колхозсене кирлĕ пек пулăшман.

Машина-трактор станцийĕ Сталин ячĕпе тăракан колхозра 1954 çулта çаксене тума палăртать:

çĕрулми лартса тăвас ĕçе пĕтĕмĕшпех механизацилемелле, кунта тăватăкал тĕмĕп лартмалли тăватă ретлĕ «СКГ-4» машинапа тата çĕрулми кăлармалли комбайнсемпе те усă курмалла.

Выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçре комплексла механизаци тумалла. Утă çулас, пухас, капана хывас, комбайн вырнă хыççăн улăм пухса купалас ĕçсене механизацилеме самоходнăй сенокосилкăсемпе, трактор крепледсемпе, волокушăсемпе, стогометальсемпе усă курмалла.

Колхоз производствине наука çитĕнĕвĕсене тата малта пыракан опыта кĕртсе пыма куллен пулăшмалла.

Ятарласа тунă машинăсемпе усă курса, минераллă удобренисем хывас, сапса тухас ĕçсене механизацилемелле. Çурхи тулă айне пĕрчĕлетнĕ удобрение ретлĕ майпа хывмалла.

Колхозра пахча çимĕç туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен бригада пулмалла.

Выльăх-чĕрлĕх ĕçĕнчи йывăр ĕçсене: витесене выльăх апачĕ илсе пырассине, тислĕк кăларассине, фермăсене шыв парса тăрассине, электричество вăйĕпе ĕне сăвассине тата çăм касассине организацилеме, çавăн пекех сĕт сухалла ма тума пулăшмалла.

Фермăсене шыв парса тăрас ĕçе лайăхлатас тесе Ятаушка шывĕ çинче пĕве пĕвелеме пулăшмалла.

Молотов ячĕпе тăракан колхозра МТС çитес 1954 çулта çак ĕçсене тума палăртать: торф кăларса туртарас ĕçе механизацилесе, хире 1.500—1.600 тонна торф кăлармалла.

Колхозра пахча çимĕç туса илес ĕçе организацилемелле, пахча çимĕç акмалла лаптăка 20—25 гектара çитермелле, унтан 400—450 пин тенкĕрен кая мар тупăш илмелле тумалла, унта мĕнпур ĕçсене механизацилемелле, шăвармалла установка лартмалла.

Тивĕçлĕ механизмсемпе тата наукăпа практика кăтартса панă меслетсемпе усă курса, улăх-çарансене лайăхлатмалла.

Районти «Первое мая», Калинин ячĕпе, Хрущев ячĕпе тăракан колхозсем пекех Молотов ячĕпе тăракан колхозăн та кăçал çĕрсем чылай Çав çĕрсене лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем туса ирттермелле, симĕс удобренисем тумалла.

1954 çулта МТС тракторпа тумалли мĕнпур ĕçсене агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх пурнăçламалла, Сталин ячĕпе тăракан колхозăн опычĕпе усă курса, çĕртме сухине тарăнрах тумалла, пĕр вăхăтрах унта органикăлла удобренисем (тислĕкпе торф)—нумайрах хывмалла. Торфпа тислĕк компосчĕ тума тытăнмалла.

Районти ытти колхозсемпе танлаштарсан, Молотов ячĕпе тăракан колхозăн обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме лайăх условисем пур. МТС пулăшнипе кунта выльăхсем валли автопоилкăсем вырнаçтарса лартмалла, кормокухня тумалла. Çавăн пекех электричество вăйĕпе сăх касассине организацилемелле.

Машина-трактор станцийĕн специалисчĕсен колхозниксемпе пĕрле 1954 çулта пур колхозсенче те выльăх апачĕн пусă çаврăнăшĕсене тепĕр хут пăхса тухмалла, вĕсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕхе тивĕçтермелĕх выльăх апачĕ — нумай çул, пĕр çул ÿсекен курăксем, выльăх кăшманĕ, силос культурисем пулмалла.

АВТОЗАВОД—ЯЛХУÇАЛĂХ ВАЛЛИ

Горький хулинчи В. М. Молотов ячĕпе тăракан автозавод туса кăларакан продукцин пĕр пайĕ ялхуçалăх валли кайать. Завод колхозсемпе совхозсене тата машина-трактор станцийĕсене автомашинăсем ăсатмасăр пусăе, ялхуçалăх валли ытти машинăсем те туса кăларать. Кунта тракторсемпе ытти ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем тăвассĕ. Кунсăр пуçне, ялхуçалăх машинисем [illegible] валли заводсене комбайнсемпе [illegible] валли моторсем куçа параççĕ.

«Горьковская правда» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, автозаводра ĕçлекенсем, [illegible] уйăхĕнче çĕрулми лартмалли «СКГ-4» маркăллă машина валли 1.400 автомат туса хатĕрленĕ.

Завод коллективĕ умне тепĕр валача лартнă. Горьковсăра [illegible] ялхуçалăх [illegible] культурисене пухса кĕртмелли комбайнсем, уй-хире удобренисем сапмалли машинăсем туса кăларассине йĕркелемелле пулăшмалла. Халĕ заводра [illegible] çак тисеплĕ заказне пурнăçлама тытăннă. Конструкторсем паянăх ялхуçалăх машинисем туса кăларас тĕлĕшпе тăракан ыйтусене тата парас [illegible] [illegible]. Çав ĕçре [illegible] специалистсем хутшăнаççĕ.

ЯЛХУÇАЛĂХ ЭКОНОМИКИНЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ

[illegible]

МАРИ ПИСАТЕЛĔСЕН ПРОИЗВЕДЕНИЙĔСЕМ — ВЫРĂСЛА

Мари поэчĕ Николай Казаков «Пастра—любимая подруга» ятлă сăвăсен пуххишĕн 1950 çулта Сталинла преми лауреачĕ ятне илме тивĕçлĕ пулнă. Çак кĕнекене Мускаври «Советский писатель» издательствин вырăсла пичетлесе кăларнă. Халĕхи вăхăтра мари поэчĕсемпе драматургĕсен тата прозаикĕсен произведенийĕсене вырăсла куçарса Мускавра тата Йошкар-Олара нумай пичетлесе кăларма тытăннă. «Марийская правда» хаçат çапла пĕлтерет:

М. Казаковăн малтанах пичетленнĕ кĕнекине виççĕмĕш хут пичетленĕ. Çавăн пекех Государствăн илемлĕ литература издательстви, поэт-лауреатăн суйласа илнĕ сăвăсен пысăк кĕнекине пичетлесе кăларнă.

«Искусство» издательстви художествăлла пултарулăх кружокĕсем валли тухтăракан кĕнекине А. Волковăн «Ксения» пьесине кĕртнĕ. Мускавра М. Майн çырнă «Кĕслесем тĕлĕй çинчен юрлаççĕ» ятлă сăвăсен пуххине те вырăсла куçарса кăларнă.

Çак кунсенче «Молодая гвардия» издательстви В. Галăй вăрçă хыççăн çырнă сăвăсен пуххине пичетленĕ. Кăçал «Дружба народов» журналăн иккĕмĕш номерĕнче Н. [illegible] «Мари [illegible]» ятлă повеçне пичетлесе кăларнă. Çавăн пекех мари халăхĕн юррисем сăвăсем вырăсла куçарса Мускавра уйрăм кĕнеке туса кăларма хатĕрленеççĕ.

ТАЛĂКРА 4.000 КУБОМЕТР БЕТОН

Куйбышевра гидроэлектростанция строительство пынать. [illegible]

[illegible]

Пур резервсемпе те туллин усă курассишĕн

Ф. МИХЕЕВ,
Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ

Пирĕн колхоз Сталин ячĕпе тăракан колхозпа юнашар ларать. Вĕсен иккĕшĕн те çĕрсем пĕр майерлĕ, çанталăк условийĕсем те пĕр пекех пулаççĕ. Унăн пысăк тухăçлă тĕштырă, техникăлла культурăсем туса илме пысăк майсем пур. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата пахча çимĕç акса тăвас енĕпе вара пирĕн майсем вĕрттĕсенчен те лайăхрах Вĕсĕн Çавал шывĕ тăрăх улăхсем, кĕтÿ çÿретмелли вырăнсем чăсăлса выртаççĕ. Улăх-çаран кăна колхозăн 250 гектар ытла шутланать.

Вăрçăччени çулсенче пирĕн колхоз тĕштырăсем кашни гектар пуçне 17—18-шар центнер туса илнĕ. унăн чаплă пасчасем пулнă Халĕ пирĕн колхоз тĕштырăпа çĕрулмине Сталин ячĕпе тăракан колхозринчен икĕ-виçĕ хут кăларах туса илет. Мĕншĕн? Вăл, чи малтанах, юлашки вăхăтра çĕре удобренисемпе начар çемçетнинчен килет. Çавăн пекех тата наука çитĕнĕвĕсене, малта пыракан опыта ĕçе сахал кĕртетпĕр. Вăрçăччен пирĕн колхоз уй-хире органикăлла тата минераллă удобренисем, уйрăмах тислĕкпе торф нумай кăларнă пулсан, халĕ вĕсене пĕчĕк лаптăксем çине çеç кăларатпăр. Сталин ячĕпе тăракан колхозра сухалакан кашни гектар çĕр çине 10—12-шер тонна тислĕк кăлараççĕ, эпир вара 2,6-шар тонна кăна кăларатпăр. Пирĕн выльăх-чĕрлĕх фермисенче тата колхозниксен килĕсенче 5—6 пин ăл ытла тислĕк пухăнса кайнă. Колхозăн торф запасĕ те нумай. Тĕштырăсен, техникăлла культурăсен, çĕрулмипе пахча çимĕç тухăçлăхне ÿстерес ĕçре органикăлла удобренисем тĕп вырăн йышăннине шута илсе, эпир çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче хире органикăлла удобренисем кăларассине 3—4 хут ÿстерме палăртатпăр 1954 çулта уй-хире 15 пин тонна тислĕк тата 5.000 тонна торф кăларатпăр Çапла вăл кашни гектар çине 5,6 тонна тăрăн пулать. Ку енĕпе колхозăн уй-хир бригадисем хушшинче социализмла ăмăрту анлăн сарăлнă. Колхоз 110 тонна ытла минераллă удобренисем кÿрсе килет. Кĕрхи тырă калчисене çуркунне пĕтĕмпех минераллă тата вырăнти удобренисемпе апат паратпăр.

Колхозра уйрăмах çурхи тулă акса тăвасси çине тимлĕн пăхма шутлатпăр. Кăçал вăл пирĕн пĕчĕк тухăçлă пулчĕ. Çитес çуракинче çурхи тулла тарăн сухаланă кĕрхи çĕртме çине, пысăк пахалăхлă вăрлăхпа, хĕреслĕ тата ансăр ретлĕ майпа акатпăр.

Эпир çитес икĕ-виçĕ çул хушшинчех тĕштырăсен тухăçлăхне кашни гектартан 17—19 центнера çитерме задача лартрăмăр. Çурхи уй-хир ĕçĕсене вăхăтра туса ирттерсе, хире органикăлла тата минераллă удобренисем нумай кăларса, 1954 çулта кашни гектартан 17 центнер тырă туса илме палăртатпăр.

Çĕрулми туса илессине вăйлатас тесе, çав кирлĕ культурăна лартса тумалли лаптăка 75 гектара çитеретпĕр. Вăл шутран 25 гектарне çĕртме уйне лартатпăр. Çĕрулми лартмалли вырăна органикăлла тата минераллă удобренисем нумай кăларатпăр. Лартасса тăватăкал тĕмĕн кăна лартатпăр. Çĕрулми тухăçлăхне гектартан 150 центнера çитеретпĕр.

Кăçал колхозра пахча çимĕçсем 11 гектар лартнăччĕ Вĕсем начар пулчĕç, унтан тупăш та сахал илтĕмĕр 1954 çулта пахча çимĕçсен 20—22 гектар таран лартатпăр. Ятарласа пахча çимĕç пусă çаврăнăшĕ тăватпăр. Пахча çимĕç тăвассине [illegible] кашни гектартан ирхи купăста 400 центнер тарăн помидорпа хăяр 250 центнер тарăн илме пулаççĕ. Колхозра теплица тăватпăр. Çĕрĕ тавăлла торф хутăштарса 100 пин чăмăл туса хатĕрлĕпĕр.

Колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕçĕ начар-ха. Çак отрасле вăйлатас тесе, колхозниксем конкретлă мероприятисем палăртрĕç. 1955 çул вĕçленнĕ тĕле колхозăн обществăлла кĕтĕвĕнче ĕне выльăхсем 260 пуç (вăл шутра сăвакан ĕнесем 150), 350 сысна, 550 сурăх, 2.500 пуç чăх-чĕп пулмалла. Колхоз 1954 çулта 200 сысна самăртать. Сĕт-çу фермипе сысна ферми çеç унчухне колхоза 500 пин тенкĕ тупăш пара ççĕ.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли çирĕп апат никĕсĕ тăватпăр Нумай çул ÿсекен курăксем 280 гектар акатпăр, унăн тухăçлăхне гектартан 40—50 центнера çитеретпĕр Выльăх апачĕ тумалли пусă çаврăнăшĕн лаптăкне 182 гектара çитеретпĕр. Унта нумай çул ÿсекен тата пĕр çул ÿсекен курăксем, тымарçимĕç, судан курăкĕ, кукуруза, силос тумалли культурăсем акатпăр. Кашни ĕне валли 100 тонна сĕтеклĕ апатсем хатĕрлемелле тăватпăр.

Колхозăн обществăлла хуçалăхĕ малалла пур енĕпе те аталанса пырса, нумай отраслĕ пулса тăрать. Çулталăкри укçа-тенкĕ тупăшĕ 1 миллион тенкĕрен иртмелле, 1954 çулта укçа-тенкĕ тупăшне 940 пин тенке çитерме пăхнă.

Пирĕн колхоз хăй вăхăтĕнче районта тата республикăра та малта пыракан колхоз пулнă. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ «ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени колхозри обществăлла хуçалăхăн пур отраслĕсене те çĕнĕрен хăватлăн аталантармалли, артель пуянлăхне ÿстермелли, колхозниксен материальнăй пурнăçне лайăхлатмалли майсене кăтартса парать. Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ ялхуçалăхне умне лартнă задачăсене чыслăн пурнăçлăпăр, тесе Коммунистсен партине шантараççĕ.

Хамăр колхоза эпир малта пыракан колхоз туса пултаратпăр, ăна малта пыракан ретне кăларатпăр та.

ЙКСĔЛМИ РЕЗЕРВСЕМ

И. А. ИВИН,
РСФСР Ялхуçалăх министерствин представителĕ, ялхуçалăх наукисен кандидачĕ

Сталин ячĕпе тăракан колхозăн опычĕ колхоз строительствин иксĕлми вăйне халăх кăтартса парать. Производствăна лайăх организацилени, çĕрĕç культурине ÿстерни, обществăлла хуçалăха вăйлатса пыни, колхозниксен материаллă тата культурăллă шайĕ ÿсе пыни çичĕ çул пăхсан, ку колхоз пирĕн Совет çĕршывĕнчи малта пыракан колхозсен шутĕнче тăрать. Анчах та унăн ÿсĕмĕ малашнĕ тĕплĕн вăнмессĕ-ха.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те чылай пысăк çитĕнÿсем турĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕх нумай усрать, унăн тухăçлăхĕ çулсеренех ÿсе пырать. Уйрăмах кунта сысна ĕрчетес ĕçе анлăн сарса янă.

Сталин ячĕпе тăракан колхозăн обществăлла хуçалăхĕ пысăк тупăшлă хуçалăх пулса тăчĕ. Çавăн пек пысăк çитĕнÿсем тунин «секречĕ» мĕнре-ха? Пирĕн шутпа кунта никĕсле уйрăм «секрет» та çук. Колхозра хуçалăха наука кăтартнă пек аталантарса пыраççĕ. Курăк акмалли пусă çаврăнăшне тунин, çĕре тарăн сухалани, уй-хирсене удобренисем нумай кăларни, сортлă вăрлăхсем акни, ялхуçалăх науки çитĕнĕвĕсене тата малта пыракан опыта производствăна анлăн кĕртсе пыни—çакăнта пĕтĕм колхоз тунă çитĕнÿсен «секречĕ».

Колхозра обществăлла интересемпе колхозниксен интересĕсене тĕрĕс çыхăнтарса пыраççĕ. Колхозниксен материальнăй пурнăçĕ çултан-çул лайăхланать, культурăллă шайĕ ÿсет.

Вăрнар районĕнчи тата Чăваш республикинчи пур колхозсен те хăйсен обществăлла хуçалăхне Сталин ячĕпе тăракан колхоз пекех вăйлă та пуян аталантарма пултараççĕ. Пур колхозсен те курăксем акмалли пусă çаврăнăшĕсем тума, уй-хире агротехникăпа тата минераллă удобренисем нумай кăларма, çĕре тарăн та пысăк пахалăхпа сухалама пултараççĕ. Пур колхоз руководителĕсен те, пуçламăш парторганизацисен те çак пысăк майсемпе тата резервсемпе тивĕçлĕн усă курни кирлĕ.

Чăваш республикинчи нумай колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç—колхоз производствинчи ли кая юлса пыракан отраслĕ пулса тăрать. Çакă вăл, чи малтан, выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕксĕр пулнинчен килет. Кайăк хатĕрлес [illegible] гектартан 800 центнер выльăх кăшманĕ туса илме пулать. [illegible] Çĕре лайăх сухалама, уй-хире удобренисем нумай кăлармалла, акнă вырăна [illegible] пăхмалла.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ялхуçалăхне малалла вăйлатма, колхозсен обществăлла хуçалăхне [illegible] [illegible] пур майсене те усă курса [illegible]. Колхоз [illegible], механизаторсем, ялхуçалăх специалисчĕсем вăйлă тырпул туса илессишĕн, выльăх-чĕрлĕхĕн [illegible] хуçалăх [illegible] обществăлла [illegible] интересĕсемшĕн [illegible] усă курса ĕçлемелле.

Канашлура çавăн пекех [illegible] ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. Смолин, Молотов ячĕпе тăракан колхозри [illegible] А. Михайлова, Сталин ячĕпе тăракан [illegible] И. Кузьмин, Сталин ячĕпе тăракан колхозри [illegible] В. Троицкий, Молотов ячĕпе тăракан колхозри [illegible] М. Степанов [illegible] тухса калаçрĕç.



Совет Союзӗнчи пысӑк хӑвӑртлӑхпа ӗҫлекен паллӑ токарь, Сталинла премилауреачӗ Генрих Борткевич нумай пулмасть Демократиллӗ Германи Республикинче пулнӑ. Вӑл чылай предприятисенче пулса, унта ӗҫлекенсене хӑйӗн пуян опычӗпе паллаштарнӑ. Генрих Рау ячӗпе тӑракан машинӑсем тӑвакан заводра паллӑ токарь завод шкулӗнче вӗренекенсене лекци вуласа панӑ.

ӲКЕРЧӖКРЕ ҪИНЧЕ: токарь-новатор Г. Борткевич метала хӑвӑрт касса якатмалли майсем ҫинчен лекци вулать.

Центральбильд фотоӳкерчӗкӗ.

Юймыньри нефть промыслинче

ПЕКИН, декабрӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Юймыньри нефть промыслисем Китайри чи пысӑк промыслӑсем шутланаҫҫӗ. Унта нефть кӑларасси ҫултан-ҫул ӳсе пырать.

«Халӑх Китайӗ» журнал кӑтартса панӑ тӑрӑх, халӑх влаҫӗ туса хунӑ ҫулсенче ирттернӗ тӗпчев ӗҫӗсем Америка специалисчӗсем Юймыньри промыслӑсенче нефть сахал, тесе каланине сирсе янӑ. Ҫак промыслӑсенче 1939 ҫулта нефть кӑларма тытӑннӑ. Нефть кӑларасси малаллахи ҫулсенче чакса пынине, журнал ҫырнӑ тӑрӑх ҫакӑнпа ӑнлантарса пама пулать: Америка монополийӗсем нефть шӗн хирӗҫсе Китая нефть йӳнӗрех ярпа илсе пырса сутнӑ.

Китай Халӑх Республикине туса хунӑ хыҫҫӑн Центральнӑй Халӑх Правительстви Юймыньри нефть промыслисене ҫӗнетес тата малалла аталантарас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем тунӑ. Ҫӗршыва ирӗке кӑларнӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче ӗлӗк юхантарнӑ нефть скважинисене пӗтӗмпех юсаса ситерне; ҫӗнӗ скважинӑсене ӗҫе янӑ, нефть тасататакан завода аслӑлатнӑ.

1952 ҫулта промыслӑсенче нефть кӑларасси, 1949 ҫулхипе танлаштарсан, икӗ хут, бензин туса кӑларасси—2,5 хут, краҫҫын туса кӑларасси виҫӗ хут ытла ӳснӗ. 1953 ҫулта нефть продукчӗсем туса кӑларассине, 1952 ҫулхипе танлаштарсан, 39 процент ӳстерме палӑртнӑ пулнӑ. Ҫак плана срокчен тултарнӑ. Ситес ҫулта скважинӑсен шутне ӳстерме палӑртнӑ. Ку вӑл нефть кӑларассине, хальхи вӑхӑтрипе танлаштарсан, 2,5 хут ӳстерме май парать.

Юймыньри нефтяниксен пурнӑҫӗ лайӑхланса пырать. Промыслӑсенче ӗҫлекен рабочисен ӗҫ укçи, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 2,5 хут ӳснӗ. Хулара лайӑх ҫуртсем туса лартаҫҫӗ, ҫӗнӗ урамсем тӑваҫҫӗ, театр, кинотеатр, больница, шкул, техникум, санатори, нумай магазинсем тата ӗҫсыннисен йӑла условийӗсене лайӑхлатмалли предприятисем туса лартнӑ.

Албанири хресченсен ӳсӗмӗсем

ТИРАНА, декабрӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). 1953 ҫул Албанири хресченсемшӗн ӑнӑҫлӑ ҫул пулнӑ.

Кӑҫал ҫанталӑк тӗлӗшӗнчен лайӑх условисем пулнипе усӑ курса, Албанири хресченсем пысӑк тухӑҫлӑ тырпул ӳстернӗ. Республикӑра тулӑ тухӑҫлӑхӗ вӑтам шутпа 29 процента яхӑн, кукуруза тухӑҫлӑхӗ—67 процент, ҫу кӑлармалли культурӑсен тухӑҫлӑхӗ 68 процент ӳснӗ. Ялхуҫалӑх министерствин сведенийӗсем тӑрӑх, ҫӗршывра кӑҫал, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, 56 процент ытларах тӗштырӑ пухса кӗртнӗ. Техникӑлла культурӑсем те ситлӗклӗ тӑран пухса кӗртнӗ.

Ялхуҫалӑхӗнчи социализмла сектора малалла тӗреклетсе тата аталантарса пыни 1953 ҫулта тунӑ паллӑ ситӗнӳ пулнӑ. Производствӑлла кооперативсем чылай тӗрекленнӗ, кооператив членӗсен пурнӑҫӗ лайӑхланнӑ.

МТС-сенче 1953 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне 374 трактор пулнӑ пулсан, ҫак ҫул кӗркуннене тӗле 559 трактор шутланать.

Партипе правительство тытса пыракан политика тӑрӑх 1953 ҫулта ҫӗрӗҫпе выльӑх-чӗрлӗх культурине ӳстерес, малта пыракан агротехникӑна пурнӑҫласа пырас, ялхуҫалӑх ӗҫӗсене механизацилессине ӳстерес, тырпул акмалли тата шӑвармалли ҫӗрсен лаптӑкне пысӑклатас, техникӑлла культурӑсем акса тӑвас, хресченсене пулӑшу парас тата вӗсен пурнӑҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе тӑвакан ӗҫсене вӑйлатнӑ.

Республикӑра тырпул акмалли лаптӑк 4,4 процент, техникӑлла культурӑсем акмалли лаптӑк 6 процента яхӑн ӳснӗ.

Индири Коммунистсен партийӗн виҫҫӗмӗш съезчӗ уҫӑлнӑ

ДЕЛИ, декабрӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Енер Мадура хулинче Индири Коммунистсен партийӗн виҫҫӗмӗш съезчӗ уҫӑлнӑ.

Столицӑри хаҫатсем пӗлтернӗ тӑрӑх, съезд уҫӑличчен чылай малтан Мадура хулинчи пиншер ӗҫсыннисем театр ҫурчӗ умне пухӑннӑ. Индин мӗнпур кӗтесӗсенчен пынӑ съезд делегачӗсене ӗҫсыннисем тӑвӑллӑн алӑ ҫупса кӗтсе илнӗ тата Индири Коммунистсен партине саламласа кӑшкӑрнӑ.

Съезда уҫасси Индири Коммунистсен партийӗн ялавӗсене ҫӗклешпе пуҫланнӑ.

Съездра хӑнасем—тӑванла Коммунистсен партийӗсен представителӗсем: Великобританири Коммунистсен партийӗн генеральнӑй секретарӗ Гарри Поллит тата Цейлонри Коммунистсен партийӗн икӗ представителӗ пур.

Съездӑн малтанхи кунӗнче съездӑн ӗҫ йӗркине тата кун йӗркине ҫирӗплетнӗ. Ун хыҫҫӑн съезд Индири Коммунистсен партийӗн юлашки виҫӗ ҫул хушшинчи ӗҫӗсем ҫинчен тата Коммунистсен партийӗн ӗҫӗнчи ситменлӗхсене пӗтермелли майсене палӑртасси ҫинчен Центральнӑй Комитет тунӑ доклада итлесе сӳтсе явать.

РУМЫНИРИ МАШИНАСЕМ ТӐВАКАН ПРОМЫШЛЕННОҪАН ҪИТӖНЕВӖСЕМ

БУХАРЕСТ, декабрӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Румынире халӑх влаҫӗн ҫулӗсенче машинӑсем тӑвакан промышленность тунӑ. Ку промышленность ҫак ҫулта пысӑк ситӗнӳсем тума пултарнӑ. Тракторсем туса кӑларасси, 1952 ҫулхипе танлаштарсан, кӑҫал 16 процент, станоксем туса кӑларасси 40 процента яхӑн ӳснӗ. Ҫӗнӗ йышши оборудовани: 3 е 4 пин киловатт хӑватлӑ турбогенераторсем, ҫӗнӗ йышши компрессорсем, станоксем, тимӗрҫӗ пресӗсем тата ытти оборудовани туса кӑларма пуҫланӑ.

1953 ҫулта машиностроени предприятийӗсене ҫӗнӗ техника парса тӑрасси ӳснӗ, новаторсен юхӑмӗ сарӑлса пынӑ. Новаторсем панӑ сӗнӳсемпе усӑ курнине пула, 1953 ҫулта металлурги тата машинӑсем тӑвакан промышленноҫӑн предприятийӗсем 57 миллион лей ытла укҫа перекетлесе хӑварнӑ.

Кӑҫал ҫӗршывра Тудор Владимиреску ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх машинисем тӑвакан завода, Молдаври шарикоподшипник заводне, руда тасататакан 6 фабрикӑна тата ытти предприятисене те ӗҫе янӑ.

АВСТРИПЕ СОВЕТ СОЮЗӖ ХУШШИНЧИ ТУСЛАХ УЙӐХЛАХӖ

ВЕНА, декабрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Австрипе Совет Союзӗ хушшинчи туслӑх обществин правленийӗ пӗлтернине пичетлесе кӑларнӑ. Унта Австрире ноябрьпе декабрь уйӑхӗсенче Австрипе Совет Союзӗ хушшинчи туслӑх уйӑхлӑхӗ ӑнӑҫлӑ иртнине палӑртнӑ.

Уйӑхлӑха официальнӑй влаҫсен представителӗсем, ҫӗршыври культурӑпа хуҫалӑхӑн нумай паллӑ деятелӗсем, нумай аслӑ шкулсен представителӗсем хутшӑннӑ. Австрире пур ҫӗрте те ӗҫсыннисен тӗрлӗ сийӗсем Совет Союзӗнчи пителх те пысӑк строительствӑпа, Совет Союзӗнчи халӑхсен миршӗн пыракан кӗрешӗвӗпе хытӑ интересленеҫҫӗ.

Францири хресченсем миршӗн кӗрешеҫҫӗ

ПАРИЖ, декабрӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Енер Жер тата Шаранта департаменчӗсенче хресченсен мире тата ялхуҫалӑхне хӳтӗлес тӗлӗшпе иртгеревен съезчӗсем пулса иртнӗ. Жер департаментӗнчи хресченсен съезчӗ Пари коммунинче пулса иртнӗ. Съезд тӗрлӗрен политикӑлла шухӑш-кӑмӑлӑ тытакан хресченсен 160 руководителӗ чӗннипе пухӑннӑ. Съезд ӗҫне нумай коммунӗсен мэрӗсем, департаментри мире тата ялхуҫалӑхне хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен комитетӑн руководителӗсем, вӑрҫӑ участникӗсем пулнӑ ҫынсем тата фашизма хирӗҫ пынӑ юхӑма хутшӑннӑ ҫынсем, ҫамрӑксен тата ытти организацисен представителӗсем хутшӑннӑ.

Департаментри мире тата ялхуҫалӑхне хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен комитетӑн секретарӗ Жер Тужаг хӑйӗн сӑмахӗнче Францири хресченсен чухӑн пурнӑҫӗ ҫинчен каланӑ. Ялхуҫалӑх продукчӗсемшӗн питӗ пысӑк налогсем тӳлеттернине пула хресченсен ҫав продуктсене пысӑк хаксемпе сутма тивет. Вӑл продуктсене хулари ӗҫсыннисем туянма пултараймаҫҫӗ. Жер Тужаг ҫакна паллӑ тунӑ: ҫакӑн пек хартгару хӗҫпӑшалланас политика тытса пынӑ пирки пулса тӑнӑ. Жер Тужаг Францири хресченсене ҫак политикӑна хирӗҫ кӗрешме чӗнсе каланӑ.

Жер департаменчӗн префекчӗ пулнӑ Сарп тата Лаффитт, Гомез коммунисен мэрӗсем тата ытти ораторсем Хӗвеланӑҫ Германири реваншистсене хӗҫпӑшаллантармалли политикӑпа килӗшме килӗ мар пирне палӑртнӑ, съезда пухӑннӑ ҫынсене Бонра тата Парижра тунӑ договорсене ҫирӗплетессине хирӗҫ кӗрешме чӗнсе каланӑ.

Ангулем хулинче Шаранта департаменчӗнчи хресченсен съездне иртгернӗ. Съезд «Европа ҫарӗ» текенскерне хирӗҫ тата правительствӑн Францири ялхуҫалӑхне йывӑрлӑха кӗртсе ӳкерекен политикине хирӗҫ кӗрешес шухӑш-кӑмӑлпа иртнӗ.

„Кӑнтӑрти ялхуҫалӑхӗнчи негрсем“

АМЕРИКӐРИ ПРОГРЕССИВЛӐ ЭКОНОМИСТАН ҪӖНӖ КӖНЕКИ

НЬЮ-ЙОРК, декабрӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). «Интернейшнл паблишинг хауз» издательстви Америкӑри паллӑ прогрессивлӑ экономист Виктор Перло ҫырнӑ «Кӑнтӑрти ялхуҫалӑхӗнчи негрсем» ятлӑ кӗнеке пичетлесе кӑларнӑ.

Фактсемпе ҫирӗплетнӗ материалпа кӗнеке авторӗ США-н кӑнтӑр пайӗнчи ялхуҫалӑхӗнчи кризиса, вӑтам тата вак фермерсен пысӑк йышӗ чухӑнланса сука юлса пынине кӑтартса парать. Ку вӑл тупӑшсем чакнипе тата укҫа йӳнелнӗ пирки производство расходӗсем ӳснипе, ялхуҫалӑх продукчӗсене сутмалли хаксем чакса пынипе, ют ҫӗршывсене ялхуҫалӑх продукчӗсем, уйрӑммӑнах ҫӗр мамӑкӗ парса тӑрасси хытӑ чакнипе палӑрать.

Суту-илӳпе промышленность монополийӗсем, фермерсемпе потребительсене ҫыхӑнтарса тӑракансскерсем, вак тата вӑтам фермерсене ним хӗрхенмесӗр ҫаратаҫҫӗ. Фермерсен банксене тата страховой компанисене тӳлемелли парӑмӗ нумай ӳснӗ. Пиншер фермӑсене залога хунӑ.

Автор ҫакна кӑтартса парать: Кӑнтӑрти мӗнпур фермерсенчен 82,6 проценчӗ—чухӑнсем. Вӗсем промышленность предприятийӗсемпе банксене пӑхӑнса тӑраҫҫӗ. Тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ хыҫҫӑн Кӑнтӑрта вак тата вӑтам фермерсем ҫука юлса, чухӑнланса пырасси вӑйланнӑ. Вуншар пин фермерсене «хӑйсен ҫӗрӗсем ҫинчен хӑваласа янӑ е вӗсем чухӑнсем пулса юлнӑ». Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи пилӗк ҫул хушшинче (1945—1950 ҫулсем) нумай ҫӗр тытса тӑракансен фермисем икӗ хут ӳснӗ, ҫав вӑхӑтрах вӑтам фермӑсен хисепӗ 20 процент, вак фермӑсен хисепӗ 38 процент чакнӑ.

Кӑнтӑрта негрсем ытти халӑхран нумайрах пулин те, кӑнтӑрти улӑ штатра негрсем мӗнпур ҫӗр лаптӑкӗн 6,5 процентне кӑна йышӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫав ҫӗр те пулин—чи япӑх ҫӗр. Халӗ негрсем—фермерсем чухӑнланса ҫӗрсӗр тӑрса юласси ӗлӗкхинчен пысӑкрах хӑвӑртлӑхсемпе пулса пырать.

Монополисем ялхуҫалӑх продукчӗсене сутӑн илмелли хаксене вӗҫӗмсӗр йӳнетни, производство тӑкакӗсене ӳстерсе пыни вак тата вӑтам фермерсен халӗ те йывӑр пурнӑҫне малалла йывӑрлатасси ҫине илсе пырать.

Ҫапла, сӑмахран, 1950 ҫулта «Кӑнтӑрти улӑ штатра шурӑ ӳтлӗ фермер семйин вӑтам тупӑшӗ мӗн чухлӗ пулнине шута илнӗ. Ҫулталӑк хушшинчи тупӑш 1.200 доллар е чухӑнсен шайӗнчен (официальнӑй йӗркепе палӑртнӑ тӑрӑх) 40 процент сахалтарах, негр-фермерӑн семйин ҫулталӑкри тупӑшӗ 500 доллара яхӑн, е 75 процент сахалтарах пулнӑ!» Ҫак семьесем аш-какай уйӑхра икӗ хутчен кӑна сутӑн илме пултараҫҫӗ.

Виктор Перло малалла Пӗрлешӳллӗ Штатсенчи кӑнтӑр пайӗнчи нумай ҫӗр тытса тӑракансен эксплуатаци формисем ҫинчен тӗплӗн ҫырса кӑтартать. Эксплуатацин чи анлӑ сарӑлнӑ формисенчен пӗри вӑл—ҫӗре тара парса, пухса кӗртнӗ тырпултан ҫуррине илни пулать. Ҫак йӗрке чуралӑхран аинӗпе те уйрӑлса тӑмасть. Фермер—ҫӗре тара илекен ҫын—«феодалсен ҫӗрӗ ҫинчи крепостной чура» пекех.

Совет музыканчӗсем Голландире

ГААГА, декабрӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Голландие совет музыканчӗсем—Евгений Малинин пианист, Игор Безродный скрипач тата В. Ямпольский концертмейстер пырса ситнӗ. Вӗсем музыкантсен ушкӑнӗн руководителӗпе Н. А. Сметанинпа пӗрле пынӑ.

Декабрӗн 29-мӗшӗнче Гаага хулинче пӗрремӗш концерт пулать, унта Евгений Малинин пианист хӑйӗн пултарулӑхне кӑтартать.

ЯПОНИРИ ХӖРАРӐМСЕМ МИРШӖН, ҪӖРШЫВА ТЕПӖР ХУТ ХӖҪПӐШАЛЛАНТАРАССИНЕ ХИРӖҪ ПЫРАКАН КӖРЕШӲРЕ

ПЕКИН, декабрӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентстви ҫапла пӗлтерет: Токиоран пӗлтернӗ тӑрӑх, унта ҫак уйӑхӑн пуҫламӑшӗнче Японири хӗрарӑмсен конгресӗ пулса иртнӗ. Конгресра сӳтсе явнӑ тӗп ыйту—тепӗр хут хӗҫпӑшалланассине хирӗҫ, миршӗн пыракан кӗрешӳре хӗрарӑмсен пӗрлӗхӗ ҫинчен тӑракан ыйту пулнӑ.

Конгресс ӗҫне 1.200 хӗрарӑм хутшӑннӑ. Конгресса уҫса, хӗрарӑмсен организацийӗн ассоциацийӗн председателӗ Р. Хирацука ҫӗршыври хӗрарӑмсене миршӗн пыракан кӗрешӳре пӗрлӗхлӗ пулма чӗнсе каланӑ. Ҫав пӗрлӗхсӗр, Хирацука каланӑ тӑрӑх, хӗрарӑмсене ирӗке кӑларасси ҫинчен сӑмах пулма пултараймасть.

Конгресра йышӑннӑ декларацире ҫапла каланӑ: «Японири хӗрарӑмсем Иосида правительствине ҫӗршыва тепӗр хут хӗҫпӑшаллантарма тата милитаризма тепӗр хут ҫӗклентерме чӑрмантарма пултараймасан, мир тума, хӗрарӑмсенӗ ирӗклӗхпе правасем пама май килмест. Японири хӗрарӑмсен конституци панӑ правӑсене хӳтӗлемелле, феодализм юлашкисене хирӗҫ кӗрешмелле, конституцие хӳтӗлемелле, ҫӗршыва тепӗр хут хӗҫпӑшаллантарнине хирӗҫ тӑмалла тата мӗнпур ҫӗршывсенчи хӗрарӑмсемпе пӗрле пӗтӗм тӗнчери миршӗн кӗрешмелле».

„Ялав“ журналӑн черетлӗ номерӗ

Чӑваш совет писателӗсен Союзӗ кӑларакан «Ялав» журналӑн 11-мӗш номерӗ пичетленсе тухрӗ.

Журналта, Октябрьти Социализмла Аслӑ революци 36 ҫул тултарни ҫинчен ҫырнӑ уместатьясӑр пуҫне, Леонид Агаковӑн «Ырӑ кӑмӑл» ятлӑ калавӗ, Н. Григорьевӑн «Октябрь хӗрӗ», Н. Стуриковӑн «Кӗрхи Ату» ятлӑ очеркӗсем, В. Бурневский «Шӑпӑрт пул» ятлӑ калавӗ пичетленнӗ. Чӑваш АССР искусствисен тава тивӗҫлӗ деятелӗ А. Н. Тогаев музыка енӗпе ӗҫлеме тытӑннӑранпа 50 ҫул тултарнӑ май Г. Краснов ҫырнӑ «Халӑх юрӑҫи» статья пур.

«Ялавра» М. Тевелев писатель ҫырнӑ «Ырӑ кӗтесӗн, Верховина!» романӑн пӗрсыпӑкне чӑвашла куҫарса пичетленӗ. Поэзи пайӗнче Юрий Краснов, Борис Тихонов, Петр Ялгир, Валентин Васильев тата Мария Волкова ҫамрӑк авторсен сӑввисем пичетленнӗ.

Критика пайӗнче В. Долгов В. Алендейӗн «Пирӗн кил» сӑвӑ кӗнеки пирки ҫырнӑ «Ҫамрӑк поэт сӑввисем» статья пичетленсе тухнӑ.

Журналта ӳкерчӗксем нумай, хуплашкисене тӗрлӗ тӗслӗ сӑрпа тунӑ ӳкерчӗксемпе илемлетнӗ.

Ҫанталӑк

Ситес виҫӗ талӑк хушшинче пирӗн республикӑра пӗлӗтлӗ ҫанталӑк тӑмалла, кутран-ситрен уяртмалла тата вӑхӑчӗпе юр ҫумалла. Виҫӗ талӑк иртнӗ тӗле хӑшпӗр вырӑнсенче тӗтре пулмалла.

Кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ енчен вӑйлах мар сил вӗрет, каярахпа сил хӗвелтухӑҫ енчен пулать. Сил вӑхӑчӗпе кӑштах вӑйланать.

Каҫхине 14 градусран пуҫласа 19 градуса ситиччен, кӑнтӑрла 10 градусран пуҫласа 15 градус таран сивӗ пулать. Сӗнӗ ҫул каҫхине 18—23 градус таран, январӗн 1-мӗшӗнче кӑнтӑрла 11—19 градус сивӗ пулмалла.

Суд

Бандитсене тивӗҫлипе айӑпланӑ

Федор Дмитриевич Молчанов вӑтам султи сывӑ та кӗрнеклӗ ҫын. Вӑл техникумра вӗренсе специальность илнӗ. Анчах тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлесе пурӑнма шутламан, тӗттӗм каҫсенче ҫынсене кинжалпа хӑратса ҫаратас ҫул ҫине тӑнӑ. Вӑл бандитсен ушкӑнне тунӑ. Иртнӗ кӗркунне Ф. Молчанов Шупашкарта Шкурин гражданина тапӑнать, ӑна кинжалпа хӑратса укҫине кӑларса илет. Ҫав каҫхинех Разин гражданина кинжалпа чиксе суранлатать.

Ноябрӗн 4-мӗшӗнче каҫхине Ф. Молчанов хӑйӗн тусӗпе В. Пономаревпа пӗрле Сосновка поселокӗнче Алексеева гражданкӑна тапӑнать. Бандитсем ӑна кинжалпа чикеҫҫӗ те пальтоне хывса илеҫҫӗ.

Тивӗҫлӗ органсем тӑрӑшнипе бандитсене ҫав каҫхинех тытса арестленӗ.

Декабрӗн 25—26-мӗшӗсенче ҫак бандитсен ӗҫне Чӑваш АССР Верховнӑй Сучӗ пӑхса тухрӗ. Суд председателӗ В. Павлова, заседателӗсем Анисимова Афанасьев, айӑплакан республика прокурорӗ И. Сидоркин пулчӗҫ.

Нумай свидетельсем кӑтартса панипе кура айӑпланакансем хӑйсен бандитла ӗҫӗсене тунаймарӗҫ.

Верховнӑй Суд Ф. Молчанова 25 ҫула, В. Пономарева 15 ҫула тӗрмене хупса лартмалла, унтан тухсан пилӗкшер ҫул саса прависӗр хӑвармалла туса приговор йышӑнчӗ.

Суд итлеме пынӑ ӗҫсыннисем Верховнӑй Судӑн приговорне ырларӗҫ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧӐВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ—декабрӗн 30-мӗшӗнче вырӑсла спектакль «Не называя фамилий»; декабрӗн 31-мӗшӗнче чӑвашла спектакль «Виҫӗ туй».

Спектакльсем 19 сехет те 30 минутра пуҫланаҫҫӗ.

КИНО

«РОДИНА»—декабрӗн 30-мӗшӗпе 31-мӗшӗнче 12 тата 14 сехетре пуҫланакан сеансенче «Высокая награда», ытти сеансенче—«Васса Железнова».

Румыни халӑхӗн пысӑк ҫӗнтерӗвӗ

Паян Румыни халӑхӗ хӑйӗн историйӗнчи чаплӑ куна паллӑ тӑвать. 1947 ҫулхи декабрӗн 30-мӗшӗнче Румыни Халӑх Республикине туса хунӑ.

Совет Ҫарӗ Румынине ирӗке кӑларнӑ хыҫҫӑн ҫӗршывра политика тата экономика енӗпе пысӑк улшӑнусем пулса пынӑ, пролетариатпа унӑн союзникӗ — ӗҫхресченӗсем — эксплуататорла классене чатӑклӑн ҫӗнтернӗ, — ҫакӑ вара Румыни Халӑх Республикине туса хума май панӑ.

Румыни Халӑх Республикине туса хунӑранпа иртнӗ улттӑ ҫул хушшинче Румыни халӑхӗ ирӗклӗ пурнӑҫ тӑвас тӗлӗшпе ӑнӑҫлӑ ӗҫлесе пычӗ. Ҫӗршыври ӗҫсыннисем, хӑйсен Рабочи партийӗ ертсе пынипе, пысӑк ситӗнӳсем тунӑ.

Промышленноҫпа транспорта, банксемпе страховой обществӑсене национализациленӗ, ҫавӑн пекех тата тулашри суту-илӳпе шалти суту-илӗве государство алӑне илни Румыни халӑхне халӑх хуҫалӑхне хӑвӑрт юсаса ситерме, ҫӗршывӑн пӗтӗм экономикине социализм ҫулӗпе ҫӗнетсе пыма май панӑ. 1949 тата 1950 ҫулсенчи халӑх хуҫалӑх планӗсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫланӑ хыҫҫӑн, Румынири ӗҫсыннисем социализмӑн экономикӑлла никӗсне хывмалли пилӗк ҫуллӑх плана пурнӑҫлама тытӑннӑ. Ҫак плана пурнӑҫланӑ май Румыни вӑйлӑ аталаннӑ социализмла промышленноҫлӑ тата механизациленӗ ялхуҫалӑхлӑ ҫӗршыв пулса тӑрать.

Республикӑри ӗҫсыннисем йывӑр промышленноҫа, чи малтан, машинӑсем тӑвакан, пӗтӗм халӑх хуҫалӑхне социализмла ҫӗнетсе улӑштармалли никӗс пулса тӑракан, промышленноҫа аталантарса пыраҫҫӗ.

[illegible] вӑлли оборудовани, метал касмалли станоксем, груз турттармалли автомашинӑсем, [illegible] тинӗссем ҫинче ҫӳремелли [illegible], халӑх хуҫалӑхне кирлӗ тата [illegible] нумай машинӑсем туса кӑлараҫҫӗ. [illegible] шӑрзтасси, нефть, ҫӗр [illegible], тимӗр тӑпра кӑларасси ҫултан-ҫул ӳссе пырать. Румынире нефть промышленноҫӗ уйрӑмах пысӑк хӑвӑртлӑхпа [illegible]. 1952 ҫулта Румынире 9,[illegible] миллион тонна яхӑн нефть кӑларнӑ, ку вӑл помещиксемпе буржуази пуҫ пулса тӑнӑ вӑхӑтра кӑларниччен чылай ытларах пулать.

Халӑх валли куллен кирлӗ таварсем туса кӑларакан промышленность пысӑк ӑнӑҫлӑхпа ӗҫлет, 1952 ҫулта 1938 ҫулхипе танлаштарсан, ҫӗр мамӑк пир-авӑрӗ 90 процент, ҫӑм пир-авӑрӗ—110 процент, сӑран атӑ-пушмак — 167 процент ытларах туса кӑларнӑ. Халӑх влаҫӗ пулса тӑнӑранпа Румыни промышленноҫӗ продукци туса кӑларасси капитализм чухнехинчен чылай мала иртсе кайнӑ. 1953 ҫулта промышленность 1938 ҫулхинчен 2,5 хут, 1948 ҫулхинчен 3,5 хут ытларах продукци туса кӑларнӑ.

Социализмла промышленность хӑвӑрт аталанса пыни ҫӗршывӑн ялхуҫалӑхӗ ӗмӗртенпе кая юлнине пӗтерме май панӑ. Халӗ ӗнтӗ Румыни ялхуҫалӑхӗнче социализмла сектор — государствӑн ялхуҫалӑхӗсем, МТС-сем, хресченсен коллективлӑ хуҫалӑхӗсем тата ҫӗре пӗрле ӗҫлемелли юлташлӑхӗсем (тоз-сем) ҫултан-ҫул ҫирӗпленсе пыраҫҫӗ. Румынире хресченсен коллективлӑ хуҫалӑхӗсем икӗ пине яхӑн тата ҫӗре пӗрле ӗҫлемелли юлташлӑхсем те икӗ пине яхӑн шутланаҫҫӗ. Совет агротехники кӑтартса панӑ ҫӗнӗ майсене пурнӑҫласа, Румыни хресченсем пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илеҫҫӗ, выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне ӳстерсе пыраҫҫӗ. Румынире буржуазипе помещиксем пуҫ пулса тӑнӑ вӑхӑтра хресченсен вак хуҫалӑхӗсен уй-хирӗнче тырпула тухӑҫлӑхӗ питӗ пӗчӗкҫӗ пулнӑ. Хальхи коллективлӑ хуҫалӑхсен тата ҫӗре пӗрле ӗҫлемелли юлташлӑхсен нумайӑшӗ вӑйӑхӗнчен [illegible] хут пысӑкрах тухӑҫлӑ тырпул туса илеҫҫӗ.

Коллективлӑ хуҫалӑхсене организацине хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен ҫирӗплетсе пынипе пӗрлех, Румынири рабочисен партийӗпе правительство уйрӑм хресченсен хуҫалӑхӗсем те тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерччӗр тесе тӑрӑшаҫҫӗ. 1953 ҫултан пуҫласа 1955 ҫулччен Румыни ялхуҫалӑхне вӑйлатма 6 миллиард лей укҫа параҫҫӗ. Ку вӑл, 1950—1952 ҫулсенчипе танлаштарсан, икӗ хут ытла нумайрах пулать.

Промышленноҫпа ҫӗрӗҫне хальхи вӑхӑтри шутра производствӑн техникӑлла никӗсӗ ҫине куҫарас тесе, Румыни халӑхӗ ҫӗршыва электрификацилемелли вунӑ ҫуллӑх плана ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пырать.

Румыни Халӑх Республикин экономикине обществӑн материальнӑй тата культурӑлла ытӑвӗсене ытларах тивӗҫтерес тӗллевпе аталантарса пыраҫҫӗ. Халӑх хуҫалӑхӗ куллен вӑйланса пырать. Ҫӗршыври ӗҫсыннисен пурнӑҫӗ лайӑхланса, вӗсен культури ӳсе пырать, рабочисемпе служащисен реальнӑй ӗҫ укҫи тата хресченсен тупӑшӗсем ӳсе пыраҫҫӗ. Румынире пурӑнмалли ҫуртсем тата культура ҫуртӗсем нумай лартаҫҫӗ. Рабочисемпе служащисем валли пурӑнмалли ҫуртсем, шкул ҫуртӗсем, клубсем, университетсем валли ҫуртсем лартаҫҫӗ, ҫӗнӗ поселоксемпе хуласем ӳсе-ӳсе лараҫҫӗ. 1948 ҫултан пуҫласа 1953 ҫулччен ҫӗнӗ пурӑнмалли ҫуртсем 1.730 пин тӑваткал метр чухлӗ тунӑ. Государство кашни ҫуллех халӑха вӗрентес тата культура ӗҫӗ валли, халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫпе социальнӑй обеспечени валли укҫа нумай уйӑрса парать.

Буржуазипе помещиксем пуҫ пулса тӑнӑ вӑхӑтра Румынире хутла сахал пӗлекен тата пачах хутла пӗлмен ҫынсем 4 миллион ҫын ытла шутланнӑ. Халӗ ӗнтӗ хут пӗлменнине пӗтерсе вӗсленсе пырать. Ҫӗршывра ачасене пурне те тулли сӗрех ҫичӗ ҫул вӗрентеҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне, рабочисемпе хресченсен ачисем профессиллӗ шкулсенче тата аслӑ шкулсенче вӗренеҫҫӗ. Халӗ Румынире пурӑнакан шкулсемпе вӑтам шкулсенче, профессиллӗ шкулсенче тата аслӑ шкулсенче вӗренекенсен йышӗ 1938 ҫулхинчен икӗ хут нумайрах шутланать Форма тӗлӗшӗнчен национӗ тата содержанийӗ тӗлӗшӗнчен социализмла культура аталанса пырать. Ҫӗнӗ Румынире наукӑпа искусство халӑхшӑн ӗҫлеҫҫӗ.

Кӑҫалхи августӑн 19—20-мӗшӗсенче Румынири рабочисен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн анлӑ пленумӗ пулса иртнӗ. Пленум хулари тата яли ӗҫсыннисен пурнӑҫне малалла лайӑхлатма тата культурӑлла шайне ӳстерме туса пымалли ӗҫсене палӑртнӑ. Ялхуҫалӑх производствине, куллен кирлӗ япаласем тӑвакан промышленноҫа вӑйлатма, пурӑнмалли ҫуртсем лартма, ӗҫсыннисем валли халех кирлӗ ытти ӗҫсене тума 6 миллиард лей укҫа уйӑрнӑ. Ҫак пилӗк ҫуллӑх вӗҫлениччен государство укҫипе 50 пин семье валли пурӑнмалли ҫуртсем тума, ҫӗнӗ клубсем, культура ҫурчӗсем, кинотеатрсем, санитарипе-спорт учрежденийӗсем нумай лартма палӑртнӑ.

Румыни халӑхӗ хӑйӗн ҫӗршывӗн тӗнчери авторитетне ӳстерес тӗлӗшпе пысӑк ситӗнӳсем тунӑ. Ӗлӗк Румыни тӗнчери капиталӑн ҫурма колонийӗ пулнӑ пулсан, ҫӗршывӑн пуянлӑхне урӑх ҫӗршывсенчи трестсемпе монополисем ҫаратса пурӑннӑ пулсан, ҫавӑн пек вӑхӑт таҫанах иртсе кайнӑ. Ҫӗнӗ Румыни—никама пӑхӑнмасӑр пурӑнакан государство. Ҫӗршыври пуянлӑхсемпе халӑх усӑ курать. Совет Союзӗ ертсе пыракан хӑватлӑ лагерьте—демократипе социализм лагерӗнче ҫирӗп тӑрса, Румыни мире юрататкан политика тытса пырать, миршӗн, тавлашулӑ мӗнпур ыйтусене калаҫусем иртгернипе татса парассишӗн кӗрешет.

Улттӑ ҫул тултарса ҫитнӗ ҫула кӗракен Румыни Халӑх Республики чечеклене ӳсе пыракан вӑйлӑ государство пулса тӑрать. Румыни халӑхӗ, хӑйӗн вӑйӗсен ҫине шанса тӑрса, хӑйӗн кӗрешӳре тӗрӗсленнӗ Рабочи партийӗ ертсе пынипе, Совет Союзӗ тусӑн тата тӳрӗ кӑмӑлӑн пулӑшнипе, ҫавӑн пекех халӑх демократийлӗ ытти республикӑсем пулӑшса пынипе, социализм ҫулӗпе шанчӑклӑн, ҫирӗп утӑмпа малалла кайса пырать.

А. МЕРКУЛОВ.

Чӑваш АССР Финанс Министерстви

Правительство постановленийӗ тӑрӑх Чӑваш АССР территорийӗнче пурӑнакан мӗнпур колхозниксене, колхоз членӗнче тӑман гражданинсене те ҫакӑн ҫинчен пӗлтерет:

1. Колхозниксем, единоличниксем, ытти вырӑнсенче пурӑнакан ытти граждансем те кооперацире тӑмасӑр промысла ӗҫӗсем тунипе, ҫӗрӗҫсӗр пуҫне урӑх ӗҫсем тунипе илекен тупӑшсенчен 1953 ҫулхи июлӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа ялхуҫалӑх налогӗ мар, подоходнӑй налог илеҫҫӗ.

2. Колхозниксем, единоличниксем, колхозра тӑман ытти граждансем 1954 ҫулта промысла ӗҫӗсем тума шутласҫӗ пулсан, хӑйсем пурӑнакан районта финанс пайӗнче 1954 ҫулта промысла ӗҫӗсем тума ирӗк паракан регистраци удостоверенийӗ 1954 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен (промысла ӗҫӗ ҫулталӑк варринче пуҫланать пулсан, ӗҫне тума пуҫличчен) илмелле.

Колхозниксемпе единоличниксем хӑйсен ялхуҫалӑх пулнӑ вырӑнтах промысла ӗҫне тӑваҫҫӗ пулсан, вӗсене регистраци удостоверенийӗсене тӳлесӗрех уйрӑха калаҫан, государство пошлини тӳлеттермесӗр, параҫҫӗ.

3. Кооперацира тӑмасӑр промысла ӗҫӗсем тунипе, ҫӗрӗҫсӗр пуҫне урӑх ӗҫсем тунипе илекен тупӑшсенчен подоходнӑй налог тӳлессинчен ҫаксене хӑтарнӑ:

— 60 ҫулхи тата унтан иртнӗ арҫынсене, 55 ҫулта тата унтан иртнӗ хӗрарӑмсене, вӗсем хуҫалӑхӗсене ялхуҫалӑх налогӗ тӳлессинчен хӑтарнисене;

— 1-мӗшпе II-мӗш группӑсенчи инвалидсене, вӗсем кооперацире тӑмасӑр промысла ӗҫӗсем тунипе тата ҫӗрӗҫсӗр пуҫне урӑх ӗҫсем тунипе ҫулталӑкра илекен тупӑш 3.000 тенкӗрен ытла мар пулсан (ытти граждансене те, вӗсен ҫавӑн пек тупӑшӗ ҫулталӑкра 600 тенкӗрен иртмест пулсан).

Анчах ҫак ҫынсем пӗтерӳре 3-мӗш пунктра асӑннӑ граждансем те регистраци удостоверенийӗ илмелле.

Илмелле пулнӑ вӑхӑтра регистраци удостоверенийӗ илменшӗн 500 тенкӗ таран штраф тӳлеҫҫӗ.

ЧӐВАШ АССР ФИНАНС МИНИСТЕРСТВИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. [illegible] 5. [illegible] ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—2-67, редактор заместителӗ—4-17, ответлӑ секретарь—4-[illegible], секретариат—3-54, промышленность пайӗ—3-74, информаци пайӗ—15-57, парти пурнӑҫ пайӗ—3-[illegible], [illegible] пайӗ—3-[illegible], пропаганда пайӗ—3-21, ялхуҫалӑх пайӗ—3-[illegible], культура пайӗ—3-61, сорт строительства пайӗ—3-54, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство конторӗ—3-[illegible].

НТ 00038 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № [illegible]. Тираж 25.000 экз.